Ик-меш çул тухать. Хаке 10 пус.

1941
ФЕВРАЛЬ
18
ЫТЛАРИКУН
40 (5755) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ

Парти организацисен промышленность тата транспорт тĕлĕшĕнчи задачисем çинчен

МАЛЕНКОВ ЮЛТАШ ДОКЛАЧĔ

I.

ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ТАТА ТРАНСПОРТ ТĔЛĔШĔНЧИ СИТĔНÛСЕМПЕ ÇИТМЕНЛĔХСЕМ

Юлташсем! Конференцире сӳтсе-явма парти организацисен промышленность тата транспорт тĕлĕшĕнчи задачисем çинчен ыйту лартнă.

Хамăн çак ыйту тăрăх тăвакан докладра эпĕ, пуринчен ытларах, промышленность тата транспорт ĕçĕн çитменлĕхĕсем çинчен, парти организацисемпе наркоматсен промышленность тата транспорт тĕлĕшĕнчи ĕçĕн çитменлĕхĕсем çинчен, вăл çитменлĕхсен сăлтавĕсем çинчен тата çав çитменлĕхсене пĕтермелли майсем çинчен калас тетĕп.

Çакă вăл, юлташсем, промышленноçпа транспорт ĕçĕнче пирĕн çитĕнӳсем çуккине пĕрре те пĕлтермест. Йăлтах урăхла, партин XVIII съезчĕ хыççăн иртнĕ икĕ çул хушшинче промышленноçпа транспорт çирĕплĕн ӳссе пычĕç.

1938 çулта промышленноçри пĕтĕм продукцин хисепĕ 106 миллиард та 834 миллион тенкĕлĕх пулнă пулсан, 1939 çулта вăл 123 миллиард та 915 миллион тенке çитрĕ, 1940 çулта вара вăл 137 миллиард та 500 миллион тенкĕлĕх пулчĕ.

Çапла ĕнтĕ, промышленноçăн пĕтĕм продукцийĕ çулран çулах вăйлăн ӳссе пычĕ.

Çак иртнĕ икĕ çул хушшинче пирĕн транспортăн ĕçĕ те лайăхланчĕ. 1940 çулта, 1938 çулпа танлаштарсан, грузооборот çакăн пек ӳссе пысăкланнă: чугунçул транспорчĕ тăрăх—10,3 процент, шывçул транспорчĕ тăрăх—12,8 процент тата тинĕс транспорчĕ çыран хĕрринчи флот тĕлĕшпе—15,1 процент ӳснĕ.

Иртнĕ çулта Совет Союзĕн промышленноçĕпе транспорчĕ виççĕмĕш пятилеткăн планне тултарас ĕçре нумаях малалла кайрĕç, туса кăларакан таварсен тата грузооборотăн хисепне пысăклатрĕç, халăх хуçалăхне малалла ӳстерсе пыма тата ССР Союзĕн оборона хăватне çирĕплетме май туса пачĕç. Çĕнĕ техникăна алла илес ĕçĕн çитĕнĕвĕсем тата оборона промышленноçĕн ӳсĕмĕ Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар Флочĕ кучухнехи тĕрлĕ ыйтăсем çĕнĕ хĕçпăталсемпе техника тĕлĕшĕнчен пуянланассине нумаях çĕкленме пулăшрĕç.

Партин XVIII съездĕнче Сталин юлташ çапла каланă: экономика тĕлĕшпе капитализмлă чи пысăк çĕршывсенчен иртсе каяс тесен, пуринчен малтан, тимлĕн тата çине тăрса малалла кайма кăмăл пулни, жертвăсем тума хатĕр тăни, пирĕн социализмлă промышленноçа пур майсемпе те сарса пымашкăн пысăк укçа-тенкĕ хывма хатĕр тăни кирлĕ, тенĕ.

Иртнĕ икĕ çулта промышленноçпа транспорта эпир питех те нумай укçа-тенкĕ хыврăмăр тата çĕнĕ предприятисене ĕçе нумай ятăмăр.

Промышленноçпа транспорта 1938 çулта—22 миллиард та 341 миллион тенкĕ, 1939 çулта—25 миллиард та 37 миллион тенкĕ, 1940 çулта—27 миллиард та 728 миллион тенкĕ капитал хывнă.

Сталин юлташ социализмлă индустриализаци çинчен вĕрентнине пирĕн парти пурнăçа çирĕплĕн кĕртсе пырать. ССР Союзне индустриализацилесси пирĕн çĕршыв социализмла аталанассин законĕ пулса тăчĕ.

Капитализмлă хуçалăхăн хушмалчи пулса каяс мар тесен, хамăр алăра пурне те тытса тăрас пулать,—тесе вĕрентет Сталин юлташ. Çак кăтартăва тĕпе хурса ĕçлесе, пирĕн парти СССР хуçалăхне хăй тĕллĕн пурăнакан хуçалăх туса хучĕ.

Социализм çĕнтерĕвĕн интересĕсемшĕн, социализм строительствин интересĕсемшĕн промышленноçа аталантармалла, хуçалăха аталантармалла,—тесе вĕрентет Сталин юлташ. Пирĕн парти, çак кăтартăва тĕпе хурса ĕçлесе, пирĕн çĕршывра капитализм шăтса тухма пултарассин пур майĕсене те пĕтерсе хучĕ.

СССР ĕнтĕ халĕ хăватлă индустриллĕ социализмлă держава пулса тăрать.

Анчах та, юлташсем, çак çитĕнӳсемпе пĕрлех, промышленноçпа транспортăн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур.

Пирĕн пĕтĕм промышленность продукци туса кăларас ĕçе 1940 çулта, 1939 çулпа танлаштарсан, 11 процент ӳстерчĕ пулин те, промышленноçăн чылай отраслисем, пуринчен ытла, паровозсемпе вагонсем тăвакан промышленность, электропромышленность, вăрман, хут, пулă промышленноçĕсем тата строительство материалĕсен промышленноçĕ кая юлса пыраççĕ, хăйсен производство планне тултарса пымаççĕ.

Наркоматсенчен хăшĕ-пĕрисем, пĕтĕм продукци тĕлĕшпе плана пĕтĕмĕшрен тултарнă, çав вăхăтрах нумай кирлĕ продукцисем тĕлĕшпе плана тултарман. Пир-авăр промышленноçĕн наркомачĕ, апат-çимĕç промышленноçĕн наркомачĕ тата çăмăл промышленность наркомачĕ çавăн пек тунă.

Çакă вăл, паллах, асăннă наркоматсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕх пулать. Плана тултарасси наркоматшăн çакна пĕлтерет: туса кăларма çăмăл продукци тĕлĕшпе кăна мар, пур йышши продукци тĕлĕшпе те плана тултармалла.

Хăшпĕр наркоматсем 1940 çулти плана тултарман кăна мар, 1939 çулпа танлаштарсан, вĕсем хăйсен пĕтĕм продукцине кăштах чакарнă та. Ку шута пулă промышленноçĕн наркомачĕ, строительство материалĕсен наркомачĕ, вăрман промышленноçĕн наркомачĕ кĕреççĕ.

Тӳрех калас пулать, çак наркоматсем ытти наркоматсенчен начар ĕçлерĕç.

Производствăн çĕнĕ мощноçĕсене вăхăтра ĕçе яманни промышленноçăн чылай отраслисен ĕçĕнче пысăк çитменлĕх пулса тăрать.

Промышленноçăн чылай отраслисенче чĕр-таварсене, материалсене, топливăна, электроэнергине ытлашши расходласа пĕтернĕ пирки, брак пулнăран пысăк çухатусем тунă пирки тата хуçасăрла тунă ытти расходсем пирки, промышленность продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетес плана тултарман. Продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетес плана тултарас тĕлĕшпе нефть, вăрман, хут промышленноçĕнче тата строительство материалĕсен промышленноçĕнче ĕç уйрăмăнах начар тăрать.

Электростанцисем,—вĕсен ролĕ калама çук пысăк,—1940 çулта хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç, анчах та электростанцисенче тата электричество парса тăракан линисем çинче, техникăллă персонал йĕркеллĕ ĕçлемен пирки тата электричествăпа ĕçре усă курассин техникăллă правилисене пăхăнман пирки пулакан аваристен хисепĕ çаплах пысăк-ха. Электричество хуçалăхĕнчи çĕнĕ техника: пысăк давлени çине тата пăсăн пысăк температури çине куçасси, аггрегатсен управлинине автоматизацилесси, электричествăран хӳтĕлес çĕрте хальхи, хăвăрт ĕçлекен çĕнĕ майсемпе усă курасси,—ĕçе вăраха тата çителĕксĕр кĕрсе пырать.

Чугунçул транспортĕнче çакă пысăк çитменлĕх пулса тăрать: чылай чугунçулсем енĕпе грузсене турттарас плана тултарман, груз паркĕнчи вагонсемпе усă курас плана тултарман тата кашни кун вăтамран груз тиесе тăрас плана тултарман. Чугунçулсем çинче груз турттаракан поездсем нумайĕшĕ расписани тăрăх çӳремен, пассажирсене турттарас ĕçе кирлĕ таран организацилемен тата поездсем кая юлса килессине пĕтермен.

Тинĕс транспорчĕпе шывçул транспортĕнче турттарас ĕçĕн, пуринчен ытла, çак кирлĕ продукцине—руда, нефть, тырă, тăвар, йывăç, кăмăк, цемент турттарас ĕçĕн планĕсем тулса пымаççĕ. Тоннаж тата ялан ĕçре çӳретмелли карацсемпе кимĕсем пысăк простойсем туни, пушатмалли пунктсенче грузсене тытса тăни çаплах пур, вĕсем чугунçул станцисен, портсен тата пристаньсен ĕçĕнче халĕ те кирлĕ пек çыхăну туман пирки пулаççĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ промышленноçпа транспорт ĕçĕнчи çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем.

II.

НАРКОМАТСЕН ТАТА ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН ПРОМЫШЛЕННОÇПА ТРАНСПОРТ ТĔЛĔШĔНЧИ ĔÇĔН ÇИТМЕНЛĔХĔСЕН САЛТАВĔСЕМ

Юлташсем, промышленноçпа транспортăн чылай отраслисем çителĕксĕр ĕçленин сăлтавĕсем мĕнле-ха?

Эпир вăл сăлтавсене большевикла тӳррĕн уçса памалла. Эпир хамăр çитменлĕхсене мĕнчухлĕ тӳррĕн уçса парăпăр, вĕсене çавăн чухлĕ хăвăртрах пĕтерĕпĕр. Çавăн пек тума пире Сталин юлташ куллен-кун вĕрентет. Çитменлĕхсене шăлса лартакан çынсем партишĕн начар ĕç тăваççĕ.

Промышленноçпа транспорт çителĕксĕр ĕçленин сăлтавĕсем наркоматсен ертсе пырас ĕçĕнчи çитменлĕхсенче тата обкомсемпе горкомсем хăйсен промышленноçпа транспорт тĕлĕшĕнчи ĕçне вăйсăрлатнинче пуласçĕ.

Наркоматсем çинчен, чи малтан, çакна калас пулать: вĕсем хăйсен ĕçне нумай тĕлĕшпе бюрократла туса пыраççĕ, кашни уйрăм предприяти патне çитсе пăхмаççĕ-ха, хăйсен предприятийĕсене пĕлсе мар, формальнă, хутсем сӳретни урлă ертсе пыраççĕ.

Наркоматсем предприятисен ертсе пыракан кадрĕсене начар пĕлеççĕ, предприятисенче ĕç мĕнле тăнине пĕлмеççĕ, предприятисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе оперативлă мерăсем ĕлкăмаççĕ. Наркоматсен ертсе пыракан работникĕсем заводсенче сайра пулаççĕ, ĕçе йĕркелеме заводсене хăйсем пулăшмаççĕ, вĕсем канцелярла, хут урлă кăна пулăшассине лайăхрах тесе шутлаççĕ пулмалла.

Наркоматсен ĕçĕнчи чи пысăк çитменлĕх çакă пулать: предприятисен директорĕсем наркоматсен решенийĕсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине вĕсем тĕрĕслесе тăмаççĕ. Çапла вара, наркоматсем хăйсен ертсе пырас ĕçĕнче коллегисен заседанийĕсемпе тата решенисем йышăннипе лăпланса лараççĕ, вĕсем çакна ăнланмаççĕ: решени вăл—ĕçĕн пуçламăшĕ çеç-ха, решенисене ĕнтĕ решенисемшĕн мар йышăнаççĕ, вĕсене пурнăçа кĕртме йышăнаççĕ; вĕсем çакна ăнланмаççĕ: ертсе пырас ĕçре тĕп вырăнта тăраканни заведанисем туса ĕçлени мар тата решенисем йышăнни те мар, вăл решенисене пурнăçа кĕртсе пынине куллен тĕрĕслени пулмалла.

Директивăсене пурнăçа кĕртнине тăгăшăнах тĕрĕслесе пырас вырăнне, наркоматсем предприятисенчи ĕçсен положенине ялан пекех фабрикăсемпе заводсен директорĕсем тата чугунçул начальникĕсем пĕлтернĕ тăрăх хаклаççĕ, çакна пула ĕнтĕ нумай директивăсем пурнăçа кĕмесĕр юлаççĕ. Предприяти директорĕ тата чугунçул начальникĕ вара, хăйĕн ведомствине кăна шута илсе, час-часах çитменлĕхсене шăлса лартать тата предприятисенчи чăн-чăн положенине илемлетсе кăтартать.

Ялан пекех, наркоматра конкретлă решенисене пурнăçа кĕртес ĕçшĕн никам та ответлă пулса тăмасть.

Акă наркоматсен руководствин канцелярла-бюрократла меточĕсене кăтартса паракан хăшпĕр фактсем.

Илĕпĕр тинĕс флочĕн наркоматне. Экономсовет 1940 çулти мартăн 7-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, Каспий флотĕнчи йĕркесĕрлĕхсене пĕтермелли плана Дукельский юлташăн пĕр уйăх хушшинче Экономсовета тăратмалла пулнă. Çак постановлението срокра пурнăçа кĕртмен. Халăх Комиссарĕ çав плана тăратмалли срока тепĕр вăхăта хăварма ыйтнă. Экономсовет план тăратмалли срока 1940 çулти майăн 1-мĕшĕн тăснă. Дукельский юлташ плана каллех тăратман. 1940 çулти октябрĕн 11-мĕшĕнче Экономсовет наркомĕ—Дукельский юлташа Каспий флотĕнчи йĕркесĕрлĕхсене пĕтермелли плана хăвăртрах тăратма хушнă. Экономсоветран янă сыру çине Дукельский юлташ кĕске резолюци хунă: «Лесовиков (нарком заместителĕ) тата Воронов (плановăй отдел начальникĕ) юлташсене—план проекчĕ ăçта?» Наркомăн çак ыйтăвĕ икĕ уйăх хушши сывлăшра çакăнса тăнă. Декабрĕн 31-мĕшĕнче кăна плановăй отдел работникĕ Гинзбург юлташ план проектне Лесовиков юлташа панă. 1941 çулти январĕн 2-мĕшĕнче Лесовиков юлташ çак материала технически эксплоатаци отделĕн начальникне Чеховский юлташа панă, вăл вара çав проекта 1941 çулти январĕн 16-мĕшĕн тытса тăнă, унтан каллех ăна çав Гинзбург юлташах панă. 1941 çулти январĕн 25-мĕшĕнче, урăхла каласан, Экономсовет решени йышăннăранпа вунă уйăх çурă иртсен, юлашкинчен, Дукельский юлташ Каспий флотĕнчи йĕркесĕрлĕхсене пĕтермелли плана Экономсовета тăратнă.

Дукельский юлташран çапла ыйтма юрать: Каспий флотĕнчи йĕркесĕрлĕхсене пĕтермелли плана вунă уйăх çурă хушши хатĕрленĕ пулсан, флотри йĕркесĕрлĕхсене хăйсене пĕтерес тĕлĕшпе тинĕс флочĕн наркомачĕ мĕн чухлĕ вăхăт ирттерме шутлать-ши? Çитменнине вăл мĕнле план пулни те паллă мар-ха!

Акă электропромышленность наркомачĕн ĕçĕнчен илнĕ факт. 1940 çулти октябрĕн 29-мĕшĕнче электропромышленность наркомачĕ 1940 çулти ноябрĕн 10-мĕш тĕлне Харьковри электромеханически заводран судостроительнăй промышленность наркомачĕ валли оборудовани тăратасси çинчен кăтарту илнĕ. Нарком Богатырев юлташ хăй патне пынă документ çине çакăн пек резолюци хунă: «çар отделĕн начальникĕ Кравцов юлташ патне—çак ыйту тăрăх васкавлă йĕркепе октябрĕн 30-мĕшĕнче распоряжени хатĕрлемелле». Распоряженине 5 кун хушши хатĕрленĕ, ноябрĕн 6-мĕшĕнче кăна вăл çав наркоматăн Главэлектромашпромне пырса лекнĕ. Çав главкăн главнăй инженерĕ Рубо юлташ çак васкавлă распоряжение ноябрĕн 10-мĕшĕнче кăна хăйсен главкĕнчи производство отделĕн начальникĕ Артемов юлташ патне çакăн пек резолюци хурса ярать: «распоряжени парас пулать». Артемов юлташ, хăйĕн черечĕпе, главк диспетчерĕ Кравчук юлташ патне: «распоряжени пама» тесе çырса ярать, Кравчук юлташ вара çав кунах, ноябрĕн 10-мĕшĕнче, урăхла каласан, оборудовани ăна кĕтекен заводсене çитме тивĕçлĕ пулнă вăхăтра, çавăн пек резолюци хунă: «дело ăшне хумалла» урăхла каласан—архива. Çапла майпа пысăк та кирлĕ заданине пурнăçа кĕртессине пĕтерсе лартнă.

Çаксем пурте ĕнтĕ—«распоряжени хатĕрлемелле», «распоряжени памалла», «распоряжени пама» тата, юлашкинчен, «дело ăшне хумалла» тенисем—элекропромышленность наркоматĕн работникĕсем енчен чĕрĕ ĕç çине чиновникла, бюрократла пăхни пулмаççĕ-и вара? Хушнă ĕçе тунине наркоматра кăшт та пулин тĕрĕслесе пынă пулсан, çавăн евĕрлĕ фактсем пулма пултарнă-ши вара? Е акă шывçул флочĕн наркомачĕ çинчен. Çак наркоматăн коллегийĕ 1940 çулта 62 заседани тунă, вĕсенче 102 ыйту итленĕ, анчах коллегире хăйĕнче çичĕ ыйту тăрăх кăна решени йышăннă. Ытти ыйтусем тăрăх решенисем хатĕрлеме комиссисене хушнă. Комиссисем ыйтусене нумайĕшне темиçе уйăх хушши редакцилеççĕ, мĕншĕн тесен хушнă заданисене ĕçе кĕртнине наркоматра никам та тĕрĕслемест. Сăмахран, «Ĕç тата финанс енĕпе показательсене пурнăçласа пынин итогĕсем çинчен» тăнă ыйту тăрăх нарком Шашков юлташ ертсе пыракан комисси хăйĕн решенине çурçул хушши, августăн 20-мĕшĕнчен пуçласа паянхи кунченех, редакцилет.

Ĕçре çакăн пек йĕркесем пулнă чухне кирек мĕнле чĕрĕ ĕçе те пĕтерсе лартма пулать. Çавăнпа вара шывçул флочĕн наркомачĕ грузсем турттарас енĕпе начар ĕçленинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

Пĕр-икĕ сăмах боеприпассен наркомачĕ çинчен. Ку наркоматра, сăмахран, çакăн пек фактсем пулнă. Нарком Сергеев юлташ хăйĕн 203 №-лĕ приказĕнче 176 №-лĕ заводăн директорне: «4 №-лĕ цехĕн фосфатировка уйрăмне тумалла, ваннăсене вырнаçтарса лартмалла та эксплоатацине памалла. Пурнăçламалли срок—1940 çулти июнĕн 8-мĕшĕ», тесе хушнă. Приказ çине июнĕн 5-мĕшĕнче алă пуснă, июнĕн 7-мĕшĕнче вырăна яма панă, çав вăхăтрах, куратăр ĕнтĕ, приказра кăтартнă ĕçсене июлĕн 8-мĕшĕнче туса çитермелле пулнă. Е акă тепĕр, 189 №-лĕ приказ. Çак приказпа 144 №-лĕ завода «1940 çулти июнĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, цехсен июнь уйăхĕнчи ĕçĕсен графикне, апрель-май уйăхĕсенче пурнăçласа çитермен ĕçсене туса пĕтермеллине шута илсе, хатĕрлеме» хушнă. Çак приказ çине майăн 31-мĕшĕнче алă пуснă, паллах ĕнтĕ, вăл завода заданине пурнăçлама палăртса панă срок тухсан тин çитнĕ. Акă виçĕмĕш факт. 151 №-лĕ приказра заводсенче хăрушăсăрлăх техники начаррине палăртнă. Саккăрмĕш пункт тăрăх, ĕçе пурнăçлакансене ĕçсен планне апрелĕн 29-мĕшĕнче Сергеев юлташ патне çирĕплетме тăратма хушнă, приказне хăйне майăн 4-мĕшĕнче тин алă пуснă.

Çакă ĕнтĕ ĕç çине тимлĕн пăхни пулать-и? Пăхăнса тăракансене заданисем панă чухне тĕплĕн шухăшлама кирлех ĕнтĕ. Çӳлте илсе кăтартнă приказсем вара дисциплинăна пăсса яма кăна пултараççĕ.

Бюрократизм, канцеляринчи волокита çинчен, хушнă ĕçе тунине тĕрĕслесе пыни çукки çинчен калакан тĕслĕхсене нумай илсе кăтартма пулать, шел те, вĕсем кашни наркоматрах пур, предприятисен ĕçĕсене кашни кунах мĕн чухлĕ те пулин тĕплĕнрех тĕрĕслесе пыни вара çук. Çав вăхăтрах заводсен ĕçĕсене кашни кунах тĕплĕн тĕрĕслесе тăрасси наркоматсен чи пысăк та кирлĕ обязанноçĕ пулса тăрать.

Наркоматсен предприятисене канцелярла-бюрократла методсемпе ертсе пыраççине пĕтермелле тата, çав мĕнпур канцелярщинăна пĕтерсе, решенисене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслес ĕçе, хăйсен предприятисен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăрас ĕçе тимлĕн туса пымалла.

Çакăн пек ĕнтĕ наркоматсен ертсе пырас ĕçĕнчи çитменлĕхĕсем.

Халĕ ĕнтĕ парторганизацисен ĕçĕн промышленноçпа транспорт тĕлĕшĕнчи çитменлĕхĕсем çинчен.

Кунта тĕп вырăнта тăраканни—парторганизацисем наркоматсене, хăйсен облаçĕнчи, хулинчи, районри предприятисене пулăшса пыманни пулать.

Парторганизацисем, промышленноçпа транспорт ĕçĕшĕн вĕсем ответлă мар тесе тĕрĕс мар шутласа, хăйсен ĕçне промышленноçра та, транспортра та вăйсăрлатрĕç.

Партин вырăнти организацийĕсем те, хуçалăхла организацисем пекех, хушнă ĕçе тунине тĕрĕсленин тупсăмне тата пĕлтерĕшне ăнланмаççĕ, çавна пула наркоматсене пăхăнса тăракан предприятисен директорĕсем наркоматсен решенийĕсене мĕнле пурнăçланине куллен тĕрĕслесе тăрассине йĕркелесе яма наркоматсемпе главксене пулăшмаççĕ.

Парти обкомĕсем нумайĕшĕ, ялхуçалăхĕ енĕпе, ялхуçалăх продуктисене хатĕрлес енĕпе ĕçлесе, промышленноçри тата транспортри ĕçе манăçа хăварнă, хăйсен облаçĕнчи, хулинчи, районĕнчи заводсен, фабрикăсен, шахтăсен, рудниксен ĕçĕсемшĕн хăйсем ответлă пулнине маннă, партин хула комитечĕсем вара, вĕсен пуринчен ытларах промышленноçпа транспорт çине çаваpăнса пăхмалла пулин те, çак ĕçе туса пымаççĕ, кая юлнă предприятисен тата чугунçулсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе мерăсем ĕлкăмаççĕ. Партин хула комитечĕсемпе обкомĕсем, фабрикăсен, заводсен, чугунçулсен çинчи ертсе пыракан çынсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслемеççĕ, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса памаççĕ, çавăн пирки вăл çитменлĕхсене пулма май параççĕ.

Партин хула комитечĕсемпе обкомĕсем чылай предприятисенче нумай вăхăт хушши тарăн прорыв пулнипе килĕшсе тăраççĕ, çав йĕркесĕрлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнмаççĕ.

Тула облаçне илер. Сирĕн, Тулăри юлташсем, Новотульскри металлурги заводчĕ, Сталиногорскри комбинат тата ытти хăшпĕр пысăк предприятисем юлашки тăватă çул хушшинче производство планне 60—80 процентран ытла мар тултарса пычĕç.

Челябинск облаçĕнче Челябинскри трактор заводчĕ тата Челябинскри цинк заводчĕ юлашки тăватă çул хушшинче производство программине 15—20 процент чухлĕ тултарса çитереймесĕр ĕçлерĕç.

Е акă Орел облаçне илер. Облаçри чи пысăк предприяти—«Красный Профинтерн» 1938 çулта плана 66 процент, 1939 çулта 63 процент тата 1940 çулта 75 процент тултарнă.

Архангельск облаçĕнчи Соломбальскри целлюлоза заводчĕ, Лальскри хут фабрики тата облаçри вăрман хатĕрлекен пысăк заводсенчен чылайĕшĕ юлашки виçĕ çул хушшинче плана 40 процентран 80 процент таран кăна тултарса пынă. Башкир АССР-чи Белорецкри металлурги заводчĕ 1938 çулта плана 77 процент, 1939 çулта—71 процент тата 1940 çулта 86 процент тултарнă.

Заводсем тăтăшах кая юлса пыни çинчен калакан çакăн пек фактсене ытти мĕнпур облаçсем, крайсем тата республикăсем тăрăх та нумай кăтартса пама пулать.

Çак заводсемпе пуринпе те парти обкомĕсемпе хула комитечĕсем ĕçлесе пыраççĕ, е, тĕрĕсрех каласан, ĕçлесе пыма тивĕçлĕ. Результатсем вара, куратăр ĕнтĕ, çакăн пек: вăл заводсем тата вĕсен евĕрлĕ заводсем темиçе çул хушши государство ĕнси çинче лараççĕ.

Парти хула комитечĕсемпе обкомсем, союзлă наркоматсене пăхăнса тăракан предприятисемпе промышленность стройкисенчи ĕçсемшĕн пĕтĕмпех наркоматсем кăна ответлă тесе йăнăш шутласа, çав предприятисемпе тата стройкăсемпе уйрăмăнах япăх ĕçлеççĕ.

Чылай облаçсем хăйсен япăх ĕçĕпе хăшпĕр питĕ кирлĕ продукцие туса кăларассин пĕтĕмĕпле планне тултарассинче ĕçе питех те чăрмантарса пычĕç.

Чугун шăратса кăларас тĕлĕшпе уйрăмах Сталинск, Запорожье тата Свердловск облаçĕсенчи предприятисем япăх ĕçлерĕç.

Çĕркăмăк промышленноçĕн Ворошиловоград, Челябинск, Свердловск тата Молотов облаçĕсенчи предприятийĕсем çĕркăмăк промышленноçне каялла туртса пычĕç.

Нефть кăларас тĕлĕшпе Чечено-Ингуш АССР-чи Грознефть, Краснодар крайĕнчи Майкопнефть предприятийĕсем, Башкир АССР-чи тата Хабаровск крайĕнчи предприятисем уйрăмах япăх ĕçлерĕç.

Паровозсем тăвас ĕç кая юлса пыни Харьков, Орджоникидзеград, Улан-Удэ хулисенчи тивĕçлĕ предприятисем начар ĕçленинчен килчĕ. Çавăн пекех Ворошиловоградрипе Коломнăри заводсем те начар ĕçлерĕç.

Мамăкран пир-авăр туса кăларас план тулайманни Иваново, Калининскри тата уйрăмах Ярославль облаçĕнчи предприятисем япăх ĕçленинчен килчĕ.

Шултра предприятисем вырнаçнă промышленноçлă хуласем чылайĕшĕ, производство планне тултарса пымаççĕ. Акă, сăмахран, Горький хули продукци туса кăлармалли плана 1940 çулта 93,6 процент, Днепропетровск—95,8 процент, Сталинград—95,8 процент, Калинин хули—93,7 процент, Челябинск—90,2 процент, Тула—85,1 процент, Ярославль—79,9 процент, Сталино хули—90,3 процент тултарнă.

Çав вăхăтрах, партин çав хуласенчи горкомĕсен пĕрремĕш обязанноçĕ—промышленность ăнăçлăн ĕçлемелле тăвасси пулса тăрать.

Партин хула комитечĕсемпе обкомĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх çакăнта пулса тăрать: вĕсем предприяти ĕçне тĕплĕн пĕлме тăрăшмаççĕ, предприятисен экономикине тĕпчесе вĕренмеççĕ тата, çавăн вырăнне, час-часах çиелтен тĕрĕсленипе тата тĕлли-паллисĕр решенисем çырнипех ирттерсе яраççĕ.

Çакă, юлташсем, факт пулса тăрать: партин обкомĕсемпе хула комитечĕсем нумайĕшĕ промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлессинчи хăйсен обязанноçĕсене парти обком бюровĕн заседанийĕсенче предприяти директорĕсен докладчĕсене итленипех вĕçлесе пыраççĕ. Çав докладсем тăрăх, ялан пекех, конкретлă мар тата завода сахал усă паракан решенисене йышăнаççĕ. Çав решенисене пурнăçланине те пачах тĕрĕслемеççĕ.

Тата тепĕр обстоятельствăна палăртма кирлĕ. Партин обкомĕ е хула комитечĕ уйрăм предприяти тĕлĕшпе çав предприяти прорыва кĕрсе тин ĕçлеме тытăнать. Завода е чугунçула вăхăтра пулăшма никам та шухăшламасть.

Промышленноçпа транспорт предприятийĕсем çине çакăн пек çиелтен пăхас йăлана пĕтерес пулать.

Партин хула комитечĕсемпе область комитечĕсен, наркоматсемпе пĕрле, хулари тата облаçри мĕнпур промышленность тата транспорт предприятийĕсен ĕçĕшĕн ответлă пулмалла. Шăпах партин хула комитечĕсемпе обкомĕсем тӳрĕмех вырăнта, ытларах объективлă, ведомствăллă хĕсĕк интерессене шута илмесĕр, пăхса тухса, предприятире ĕçсем мĕнле тăнине тĕпчесе пĕлме, унăн ĕçĕнчи çитменлĕхсем мĕнре пулнине палăртма тата предприятисемпе наркоматсен ертсе пыракан работникĕсене çав çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмашкăн пултараççĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ, юлташсем, промышленноçĕн чылай отраслисем çителĕксĕр ĕçленин сăлтавĕ, çакăн пек ĕнтĕ промышленноçпа транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсен сăлтавĕсем.

Малалли 2-мĕш страницăра.

ВКП(б) Пётём Союзри XVIII конференцийё

Маленков юлташ докладчён малалли

III.

ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН ПРОМЫШЛЕННОÇПА ТРАНСПОРТ ТЁЛЁШЁНЧИ ХУÇАЛĂХЛĂ-ПОЛИТИКĂЛЛĂ ЗАДАЧИСЕМ

Промышленноçпа транспорт ёçёнчи ситменлĕхсене пётерес тесен, парторганизацисен мён тумалла-ха?

Ана тăвас тесен, пуринчен малтан, парти организацийёсем промышленноçпа транспорта ёçё çине интереслемесёр пăхнине йăлтах пётерес пулать, **парторганизаци тимлĕхне промышленноçпа транспорт нушисемпе интересёсемшён пётём вăйпа тăрăшасси еннелле татăклăнах çавăрас пулать.**

Парти организацийёсем промышленноçлă предприятисемпе чугунçулсен ёçёсене тăтăшах тĕпчесе пĕлсе тăма, вёсен мушисемпе ыйтăвёсене палăртса пыма тата хуçалăх организацийёсене вёсем промышленноçпа транспорта ертсе пырас тĕлĕшпе куллен туса пыракан ёçре пулăшу пама тивёçлё.

Парти организацийёсен тĕп тимлĕхё халиччен ялхуçалăхне ертсе пырас ёç çинче пулнă. Тĕштырă проблемине татса паман чухне çакă вăл тĕрёс пулнă. Анчах та халё, тĕштырă проблемине тата çулсеренех 7—8-шар миллиард пăт тĕштырă туса илес проблемăна тĕпрен илсен татса панă хыçăн, — **парти организацийёсене промышленноçпа транспорт еннелле çавăрни кирлё.** Çакă вăл ялхуçалăх тĕлĕшпе тимлĕхе вăйăрлатмаллине пĕлтермест. Анчах çакă вăл акă мёне пĕлтерет: парти организацийёсем вăйлăн ӳсрёç, вёсем промышленность тĕлĕшпе те, ялхуçалăх тĕлĕшпе те **пĕр танах** ёçлесе пыма пултараççё.

Парти организацийёсен питех те кирлё, кая хăварма юраман задачи — вёсен промышленноçпа транспорт тĕлĕшёнчи ёçён ситменлĕхёсене пётересси пулса тăрать.

Парти организацийёсен наркоматсемпе предприятисене фабрикăсенче, заводсенче, шахтăсенче, чугунçулсем çинче, портсенче тата пристаньсенче йёркелёх туса хума пулăшмалла. Кунта кашни уйрăм предприяти тĕлĕшпех конкретлăн ёçлеме тытăнмалла. Промышленноçпа транспорта лайăхлатмалли тата вăйлатмалли çĕнё майсене палăртас ёçре парти организацийёсем мён кирлё таранах пуçарулăх кăтартма тивёçлё.

Малалла, парти организацийёсем предприятисен директорёсен ёçне тĕрёслес, **наркоматсен решенийёсене предприятисем пурнăçа мёнле кёртсе пынине тĕрёслес ёçре** наркоматсемпе главксене пулăшса пыни кирлё.

Промышленноçпа транспорт ёçёнчи решенисене пурнăçа кёртнине тĕрёслес тĕлĕшпе парти организацийёсен ёçне тĕпренех лайăхлатни питех те кирлине парти ёçёнчи руководительсем ăнланса илме тивёçлё. Парти организацийёсем çакна ăнланса илме тивёçлё: предприятисен ёçне, наркоматсен решенийёсене пурнăçа кёртсе пынине пĕр наркоматсем кăна тĕрёслесе тăма пултараймаççё. Çавăнпа та парти организацийёсем наркоматсен директивисене предприятисем пурнăçа кёртсе пынине тĕрёслес ёçре, урăхла каласан, предприятисен директорёсен ёçне контроллес ёçре наркоматсене пулăшу пама тивёçлё.

Çак условисенче кăна кашни предприяти, кашни чугунçул государство планёсене тăтăшах тултарса пырассине пурнăçа кёртме, çапла вара промышленноçпа транспорта аталантарас ёçе малалла яма пулать.

Промышленноçпа транспорт ёçёнчи ситменлĕхсене пётерес тесен, парти организацийёсен тата мёнле мерăсем йышăнмалла-ха?

ПРЕДПРИЯТИСЕНЧИ ОБОРУДОВАНИНЕ, ТЕРЛЕ ПУРЛĂХСЕМПЕ МАТЕРИАЛСЕНЕ УЧЕТА ИЛЕССИ ÇИНЧЕН. Çак ыйтуран пуçлас пулать, мёншён тесен, нумайёшё çакăн çинчен манаççё: оборудованине, пурлăха, материалсене тĕрёс учета илмесёр, предприятине тытса тăма çук. Предприяти директорё, вăл предприятие хăй аллинче кирлё пек тытса тăрас тет пулсан тата суккăрăн мар, мён пулать те мён килет тесе мар ёçлес тет пулсан, заводăн пётём хуçалăхне лайăх пĕлсе тăма тивёçлё, заводра ăçта тата мён чухлё оборудовани, инструмент, чĕртавар, материалсем пуррине пĕлсе тăма тивёçлё.

Апла пулсан та, нумай фактсем кăтартса панă тăрăх, предприятисенче оборудованине учета илес ёçе, материалсене, чĕртавара тата хатĕр продукцине те учета илес ёçе пачах çителёксёр йёркеленё. Предприятисен руководителёсем ытлашши ёçсе кайнă штатсене тата учетри ытлашши япаласене пулма май параççё, анчах та вёсен аллинче предприятири ресурссем çинчен калакан чи кирлё сведенисем çук.

Акă кăтартуллă факт. Наркомцветметăн Кольчугинăри завочён директорён Петров юлташăн 1941 çулти январён 7-мёш тёлне 2-мёш номерлё цехра туса çитермен продукци мён чухлё пулни çинчен пĕлмелле пулнă. Завод бухгалтерийё ăна 81,6 тонна тесе пĕлтернё, плановăй отдел 47,7 тонна цифрăна асăннă, цехри кёнекесем тăрăх, 51,5 тонна шутланнă, тёрёслесе пăхсан вара, чăннипе 11 тонна пулни палăрнă. **(Залра хускалаççё).**

Хăвăрах шухăшлăр, юлташсем, çакăн пек учетпа директор мёнле ёçлеме пултартăр ёнтё.

Учет хальхи пек пулнă чухне, сăмахран, çакăн пек фактсем те пулма пултараççё. 1940 çулти 9 уйăх хушшинче Касптанкер судинсем 12,5 пин тонна ытлашши топливо расходланă. наркомат вара Касптанкера топливо енёпе 2 миллион тенкё перекетлене кă вăл пурё те вăрман промышленноçён пиломатериалсем кăларас тĕлĕшри производствăллă мощноçён 41 процентчё кăна пулать.

Вăрманта пирён промышленноçпа транспорт валли çавăн пекех питех те питех кирлё вёт-ха.

Час-часах çапла та пулать: квалификациленё дефицитлă оборудованипе, производствăн сложнăй аггрегачёсемпе, пысăк станоксемпе хăйсеммён вырăнсăр çёрте усă кураççё е вёсене тулли нагрузкăпа ёçлеттермеççё. Çавăн пек квалификациленё дефицитлă оборудованипе простой операцисем тăваççё е вак детальсем туса хатĕрлесçё, вёсене простойрах тата пĕчĕкрех оборудованипе туса хатĕрлесен усăллăрах пулнă пулĕччё. Час-часах çапла та пулать: каруселлё темён пысăкăш станок çинче чей чашки пысăкăш деталь туса хатĕрлеççё.

Оборудованипе çакнашкал тĕлли-паллисёр усă курни пирён предприятисен производствăри чăн-чăн тухăçлăхне чакарать, пётём халăх хуçалăхне питех те пысăк сиен кӳрет.

Инструменпа та çавăн пекех питё начар усă кураççё. Предприятисенче инструментпа тĕрёс мар усă кураççё. Хаклă инструментпа тивёçлё мар выränта усă кураççё. Ёçре пулнă, анчах юсама тата çĕнёрен усă курма юрăхлă инструмента час-часах тимёр-тăмăр татăкёсене пухнă çёре параççё.

Материалсене, чĕртавара тата топливăна илес пулсан, кунта пирён вёсене çавтери хытă салатса пётереççё. Металран шăратса тата касса детальсем тунă чухне металран нумай касăксем пулса юлаççё. Касăксемпе вара, вăл шутрах сайра пулакан хаклă металсен касăкёсемпе те, пётёмёшпех мар усă кураççё. Раскройкăпа заготовка ёçёсене тĕрёс мар тата перекетсёр тунипе ге металл нумай пётет. Проката çителёклё анлă мар сортиментпа тăваççё, çакна пула металл ытлашши расходланать.

Пирён предприятисенче тата чугунçулсем çинче топливăна ытлашши çунтарса пётерни, электроэнергине ытлашши расходлани халё те питё нумай-ха. Хытă топливăпа усă курма май пур çёрте шёвё топливăпа усă курса, ăна перекетсёр расходласа пётереççё.

Задача çакăнта пулать: оборудованипе усă курас ёçри хуçасăрлăха тата инструмента, чĕртавара, материалсене, топливăна, электроэнергине расходлас ёçри перекетсёрлĕхе пётермелле, пирён промышленноçпа транспортра производствăллă мощноçсемпе пётёмёшпех усă курмалла тăвас пулать.

Пирён промышленноçлă предприятисенче тата чугунçулсем çинче **оборудованипе пётёмёшпех тата тĕрёс усă курни, инструментпа, чĕртаварпа, материалсемпе, топливăпа, электроэнергипе типтерлё усă курни** кирлё.

ПРЕДПРИЯТИСЕНЧЕ ГОСУДАРСТВО ПУРЛĂХНЕ СЫХЛАСА УСРАССИ ÇИНЧЕН. Государство пурлăхне—предприятисене шанса панă сооружениссене, çуртсене, оборудованине, инструмента тата мёнпур материаллă хаклăхсене сыхласа усрасси—фабрикăсенчи, заводсенчи, чугунçулсем çинчи тата шыв транспортёнчи руководительсен, инженерсен, рабочисен, служащисен чи пирвайхи тивёçлĕхё пулса тăрать. Çакна предприятисенчи нумай работниксем ăнланмаççё, кашни утăмрах халăх пурлăхне тирпейсёр, хуçалла мар тытăканинне кăтартаççё.

Нумай предприятисенче пирён промышленноçа питех те кирлё оборудовани, чĕртавар, материалсем, инструментсем, ăçта килчё унта йăваланса выртса, пăсăлаççё, тутăхаççё, юрăхсăра тухаççё.

Ку тĕлĕппе эпир, юлташсем, фактсене хăвăрăн облаçсемпе хуласенчи предприятисенчех тупма пултаратăр.

Воронеж облаçёнчен килнё юлташсене ку ёçре пулăшма пултаратăп.

1941 çулти январён 14-мёшёнче Липецк хулинчи 61-мёш номерлё заводра юр айёнчен, уçă пĕлёт айёнче тĕрлё çӳп-çап хушшинче ăнсăртран 70 станок, ёçе юрăхлă станоксем тупнă. Çак заводра директор пур вёт, парторганизаци пур, юлашкинчен, Липецкра партин хула комитечё пур. Мёне пăхаççё-ши вёсем? Оборудованине сыхласа усрассишён тăрăшни ăçта кунта?

Çакă вăл государство пурлăхё çине преступленилле пăхни мар-и ёнтё?

Пирён предприятисенче харпăрхăй станокё, харпăрхăй инструменчё çине йёрёнчёклён, типтерсёр пăхасси анлă сарăлни çинчен каламалли те çук. Станоксемпе инструментсене типтерсёр пăхни, оборудование, çурт-йёре вăхăтра юсаманни тата начар юсани вёсене вăхăтсăрах ишёлтерни тата стройран кăларни курăнсах тăрать.

Транспортра ёçре çӳрекен паровозсемпе вагонсене, карапсемпе кимёсене ремонт тăвассине юхăнтарса яни, чугунçулсене тата шыв çулёсене типтерсёр тытса усрани — аваримсен пысăк сăлтавё пулса тăрать.

Задача çакăнта пулать: **халăх пурлăхё** çине çакăн пек государствăна хирёçле пăхнин палăрăмёсене пётермелле.

Промышленноçлă предприятисемпе транспортра **материальнăй мёнпур пурпăхсене тĕрёс тата лайăх сыхласа усрамалла тăвас пулать.** Предприятисен руководителёсем государствăн хăйсене шанса панă пурлăхне, çуртйёре, оборудованине, инструмента, материалсене сыхласа усрамалла тăвас пулать.

ПРЕДПРИЯТИСЕНЕ ОБОРУДОВАНИПЕ МАТЕРИАЛСЕНЕ СУТМА ЧАРАССИ ÇИНЧЕН. Ку ыйту тĕлĕппе, юлташсем, темиçе кун маларах çеç Указ кăларнă. Мён пирки кăларнă-ха çак Указа? Ана çакăн пирки кăларнă: пирён предприятисенче оборудованипе материалсене сутса е ытти предприятисемпе улăштарса салатса ярасси вырăн йышăнса тăрать. Предприятисене государство оборудованипе материалсем пĕр-паллă ёçе тумашкăн парать, анчах, предприяти руководителёсем закона пăхăнмасăр вёсемпе хăйсен ирёкёпе хуçаланаççё, вёсене сутаçё, улăштараççё, аякка парса яраççё.

Государство пурлăхне сутнин, салатнин факчёсене эпир, юлташсем, хăвăр облаçри, хулари предприятисенчех нумайёшёнче тупма пултаратăр.

Акă, тĕслĕхрен, Донбасра, Сталино хулинче, металлурги завочё 1940 çулта Корсунри текстиль фабрикинне, Сталинори пищеторга, драма театрне çур миллион тенкёлёх ытларах заводри тĕрлё материалсене парса янă.

Çав завод директорне хăйне шанса панă государство пурлăхне çакăн пек ытткалама кам ирёк панă, тесе ыйтас килет.

Е тата, Омск чугунçулё çинче винтмелли тимёре, пăтана, олифăна, пĕренесене тата ытти материалсене те аякка сутни çинчен калакан фактсем пулнă.

Çакăн пек ёçсем тумашкăн Омск чугунçул начальникён мёнле право пур-ха?

Свердловск облаçёнчи Средне-Уральски пăхăр шăратакан завод 1940 çулта «Цветметснаб» конторине 100 пин тенкёлёх водоарматура сутнă. Анчах та, кунта кулăшла ёç пулса тухнă. Директор çак арматурăна сутнă вăхăтра, çак заводăн ответлă исполнителё текен сынни вăл завода валли тĕрлё материалсемпе оборудавани тыраса çӳренё. Шыранă май, вăл «Цветметснаб» складне кĕнё те унта хăйне юрăхлă пек туйăннă водоарматурăна курах кайнă. Ответлă исполнитель çак арматурăна нумаях та пулмасть хăйсен заводĕнчен сутса янине пĕлмесёр, ăна сутăн илнё те хăйсен заводне турттарса пынă, халё вара вăл уншăн 111 пин тенкё тӳленё **(кулаççё).**

Çак заводри йёркесем мёнлине ăнланма пулать ёнтё, юлташсем. Чăннипе, çакăн пек «операцисем» тунăшăн директорăн тăкаксене тӳсмелле пулнă, анчах та, пирён наркоматсенче çакнашкал айванлăхсене пурне те хысна шучё çине тиеме хăнăхнă пирки, директор лăпкăнах пурăнать. Тен, çак директор çак материалсене ăнăçлă сутнăшăн, ответлă исполнитель вёсене ăнăçлă туяннăшăн преми те илнё пулĕ-ха **(пурте кулаççё).**

Запорожьери ферросплавсен завочё «Главгосхлопконпромăн» Орехово-Зуевскри механичеки заводне кокс тата ферросилицин аланчăкне парса янă. Çак материалсемшён Орехово-Зуевскри механически завод Запорожьери ферросплавсен заводне мануфактура панă. Çакăн çинчен завод директорё Филатов юлташ çырса панă хут çине «Главспецсталён» начальникё Шереметьев юлташ çапла резолюци хунă: «Ку тĕрёс мар пулсан та, килёшетёп. Малашне ун пек тума чăратăп» **(кулаççё).**

Каласа панă тăрăх, завод руководителёсем, çакăн пек резолюцине хавхаланăскерсем, улшăсла тĕрлё операцисем тăваççине часах çĕнёрен пуçласа янă.

Усă курма çук текен тата ытлашши оборудованипе материалсене сутас йăла социализмлă харпăрлăха салатни пулса тăни çинчен тӳррипех калас пулать.

Задача çакăнта пулать: СССР Верховный Совечён Президиумё 1941 çулти февралён 10-мёшёнче «Оборудованипе материалсене сутма, улăштарма тата урăх çёре пама тата чарасси çинчен тата çак закона хирёçле ёçсемшён суд умёнче ответ тыттарасси çинчен» кăларнă Указа пурнăçа çирёп кёртсе пыма лла.

Нумай предприятисемпе чугунçулсем çинче усă курма çук текен тата ытлашши оборудованипе материалсене сутас йăлана пĕтерсе хумалла, мёншён тесен вăл социализмлă харпăрлăха çаратнипе пĕрех пулса тăрать.

ПРЕДПРИЯТИСЕМПЕ ЧУГУНÇУЛСЕМ ÇИНЧИ ТАСАЛАХПА ЙЁРКЕЛĔХ ÇИНЧЕН. Тасалăх вăл хальхи вăхăтра предприятисем йёркеллё ёçлессин элементарнăй условийё пулса тăни питех те паллă пек туйăнать.

Оборудование пăхмасан, тивёçлё тасалăхра тата йёркеллё тытса усрамасан, вăл час-часах ёçлеме чарăнать. Тасалăхпа йёркелёх çук çёрте аварисемпе катастрофăсем пулмасăр иртме пултараймаççё. Таса мар, юсавлă мар оборудованипе ёçлени, юсавлă мар инструментпа усă курни продукцие брак туса кăларать.

Тасамарлăх вăл — пурпĕрех йёркесёрлёхе, дисциплина çирёп маррине, заводра йёркесем юхăнассине çуратать тата вёсен çăлкуçё пулса тăрать.

Нумай предприятисенче пуçпулса тăракан культурăсăрлăх, тĕрлё ăпăр-тапăр тултарни рабочисен, мастерсен, инженерсен ёçне организацилеме кансёрлет, вёсене ёç вăхăчёне тухăçлă усă курма чăрмантарать. Çаксем пурте вара предприятин производствăллă мощноçне чакарасси, продукци сахалрах туса кăларасси тата унăн пахалăхне чакарасси патне илсе пыраççё.

Анчах çапах та, пирён предприятисенче, цехсенче, завод территорийёсенче, депосенче, чугунçул мастерскойёсенче, электростанцисенче, вокзалсенче, тинёсри тата юханшывсем çинчи портсенче нумайёшёнче тасамарлăх пуçпулса тăрать. Ёç вырăнне, оборудование, инструмента тата чĕртавара типтерсёр тытаççё. Станоксем патёнче, иртсе çӳремелли вырăнсенче ăпăр-тапăр, тимёр-тăмăр касăкёсем выртаççё. Чӳречесем, цехсен кантăк крышисем тусанланса пётнё, вёсем хăйсем витёр çителёклё сутă кёртмеççё.

Акă сире тĕслĕх. Магнитогорскра мёнпур çёршывёпе палла завод пур. Çак заводра вара цехсене тёрлё ăпăртапăрпа тултарса лартнă. Тёрлё ăпăртапăр ăраснах мартен тата прокат цехёнче нумай. Каласа панă тăрăх, 12-мёш №-лё мартен кăмаки хыçёнче тёрлё ăпăр-тапăр купи выртать, ăна турттарса тухмашкăн темён чухлё пушă вагон памалла. Пĕрремёш тата иккёмёш мартен цехёсем хушшинче тавлашӳллă территори текен вырăн пур, урăхла каласан, çак территорие икё цехё те йышăнмаççё. Магнитогорскра тавлашăва мёнле татса параççё-ха? Икё цехёшён те «килёшӳллё» татса параççё иккен. Икё цехё те çак территори çине тёрлё çӳп-çап кăларса пăракаççё те, пёри те тасатмаççё. Магнитогорец-юлташсене çак цехсем хушшинчи тавлашăва кунта конференцине татса пама тивет пулмалла, мёншён тесен партин хулари комитечё çак ёçе конференциччен пăхса тухма ерçеймен. Тата çапла та каласа параççё: Магнитогорскри хула комитечён ертсе пыракан работникёсем цехсенче пулкаласçё иккен, анчах та цехсене пырса кёрес тесен вёсен чылаях вăй пётерме лекет, мёншён тесен вёсен тимёр шăранчăкён тăвё урлă чаваланса каçма тата тёрлё ăпăр-тапăрпа çӳпçапран такăнса утса пыма тивет.

Чи паха оборудованиллё завод шутланакан Магнитогорскри заводра обязательнă йёркепех тасамарлăхпа ăпăртапăр пулмалла тесе шутлани магнитогорецсене килёшет-ши вара?

Е тата Цветметнаркомачён Иваново облаçёнчи Кольчугино завочё. вăл завод çинчен асăнтăмăр ёнтё. Çак заводăн цехёсенче тасамарлăх тата ăпăртапăр нумай пирки, шăратса кăларакан изделисем сумне час-часах урăх металл е тасамар урайёнче выртакан металл сумне çыпçăннă пылчăк таткисем пĕрлешсе каяççё. Çак брака заводра ятарласах уйрăм ят та панă, ăна «шăратнă çёрти пылчăк» теççё. 1940 çулти ноябрьте кăна 4-мёш №-лё цехра брак пирки 870 акт çырнă, вёсенчен 136 актне «шăратнă çёрти пылчăк» текен брак пирки çырнă. Çулталăк хушшинче çак цехра брак пирки пулнă убыток 300 пин тенкёрен иртет.

Совет заводне çавнашкал çӳп-çапсемпе тултарса лартма кольчугинецсене кам право панă?

Е тата Мускаври Савеловский вокзалах илёр. Çак вокзал йёркесёрленсе кайнă тата унта культура çук. Шыв кайнипе маччисем тасамарланса, тёксёмленсе ларнă, кăвакарса кайнă. Чӳречесем сумне шанса ларнă пăр прёлнипе урайне шыв юхать. Буфетра сётел çинчи скатертьсем таса мар. Вокзал çуртёнче пёр печёк пӳлёме ремонт тунă. Çав пӳлёмрен вара пётём вокзал тăрăх тасамар йёр сарăлнă. Хула тулашне ларса каймалли билетсем сутакан кассăсен залёнче урай пылчăклă тата перус тёпёсем пăрахса тултарнă.

Çавнашкал культурăсăрлăха малашне те тӳссе тăма пулать-и вара? Заводсен директорёсем, депо начальникёсем, вокзалсен начальникёсем хăйсен предприятийёсенче тасалăх туса хума тата яланах таса тытса тăма тивёçлё. Çав мёнпур йёркесёрлёхсемшён вёсенчен, директорсенчен ответ ыйтас пулать. Директор ответ тытать, унăн вара цехсен начальникёсенчен ыйтма пёлес пулать. Çакăн пек йёрке туса хума май çук-и вара: сменăри пёр дежурнăй сменăна йышăннă чухне, тепри вара сменăна панă чухне цехсем тасалăх тĕлĕшёнчен мёнле пулнине те асăрхаса тăччăр.

Пирён заводсенче, шахтăсенче, депосенче, вокзалсене, портсене ăпăртапăрсемпе пылчăка малашне тӳсме çук. Предприятисенче культурăсăрлăха пётерме тахçанах вăхăт. Халăх пурлăхё çине тирпейсёрле, хуçасăрла пăхни государствăна калама çук пысăк сиен кӳрет.

Хуçасăрлăха, тирпейсёрлёхе, тасамарлăха, культурăсăрлăха Ленин пёр хутчен мар питленё. Ленин çапла каланă: çав «капитализмăн традицийёсене сыхласа усракансене» хирёç **вăрçмасан,** эпир хамăран тивёçе пурнăçа кёртме çук, пирён çёршыв умёнче тăракан аслă задачăсене, социализмран коммунизма куçассипе сыхăнса тăракан задачăсене элементарлă культурăсăр татса пама пулмасть.

Совет завочё тасалăхпа йёркелёх тĕлĕшёнчен пример кăтартаканни пулмалла.

ПРЕДПРИЯТИ ПРОИЗВОДСТВАЛЛА ПРОГРАММАНА ТУЛТАРМАЛЛИ ГРАФИК ÇИНЧЕН. Хальхи вăхăтра, юлташсем, ёç çакăн пек тăрать: хатĕр продукци туса кăларасси нумайёш предприятисенче пёртикёс мар, татăкăн-татăкăн тата, правило пекех, уйăх вёçнелле пулса пырать. Предприятисенче хатĕр продукци туса кăларас тĕлĕшпе малтанах хатĕрленё çирёп график çук.

Акă сире паллăрах примерсем.

Коломна хулинчи (Мускав облаçё) машинăсем тăвакан завод 1940 çулта çапла ёçлерё: кашни уйăхăн малтанхи декадинче продукцин 5—7 процентне, иккёмёш декадинче — 10—15 процентне, виççёмёш декадинче вара — 75—80 процентне туса кăларнă.

Ленинградри Карл Маркс ячёпе тăракан завод 1940 çулти декабрь уйăхёнче малтанхи декадăра уйăхри продукцин 2 процентне, иккёмёш декадăра—8 процентне, виççёмёш декадăра вара—90 процентне туса кăларнă.

Мускаври насосно-компрессорнăй заводра 1940 çулти декабрьте продукци туса кăларасси çапла пулнă: декабрён малтанхи декадинче уйăх планне 3,4 процент, иккёмёш декадăра—27,5 процент тата виççёмёш декадăра—69,1 процент тултарнă.

Нумай предприятисенче эпир çакăн пек картина куратпăр. Хатĕр продукци туса кăларкан цехсем, сборочнăй цехсем ытти цехсенчен çурмафабрикатсене татăкăн-татăкăн, пёртикёс мар илсе тăраççё. Предприятисем япаласене кирлё таран хатĕрлемесёр ёçлеççё тата, правило пекех, уйăхăн малтанхи çурринче предприятин мёнпур вăйёсене кирлё япаласем тунă çёре яраççё.

Ёçре çакнашкал тĕрёс мар режим пулни яланах авралсем тăвасси патне, оборудовани простой тăвасси патне, ёç вăйё простой тăвасси патне, производствăллă мощноçсемпе çителёксёр усă курасси патне, брак ӳсесси патне, сверхурочнăй ёçшён усăсăр тӳлесси патне илсе пырать. Çакнашкал тĕрёс мар режим пулни предприятисене калкал тата йёркеллё ёçлеме май памасть тата вёсене яланах государство планне тултармасăр хăварас хăрушлăх умёнче тытса тăрать.

Предприятисен ёçёнчи плансăрлăха, **продукцине тикёсмар кăларса тăрассине,** штурмовщинăна **пĕтерес** пулать тата производствăллă программăна кашни завод, фабрика, шахта, чугунçул малтанах туса хатĕрленё график тăрăх кунсерен тултарса пымалла тăвас пулать.

Хăшпĕр наркоматсенче лайăх йёркеллё туса хума пуçларçё, çав йёркеллё тăрăх заводсен директорёсем ёнер мён чухлё хатĕр продукци туса кăларни çинчен кашни кунах наркома пĕлтерсе тăраççё. Пĕр цифра çеç кăтартса паракан çавăн йышши донесенисем заводсен ёçне кашни кун контроллесçё пама май параççё. Çав донесенисем тăрăх продукци туса кăларас тĕлĕшпе панă графикран хăш заводсенче пăрăнни курăнса тăрать. Çавăн пек донесенисем наркомсене кулленхи заданине тултарманнин сăлтавёсене вăхăтра тупса палăртма тата тупса палăртнă çитменлĕхсене тӳрлетес тĕлĕшпе вăхăтра мерăсем йышăнма хушаççё.

Кулленхи донесенисем, вёсене ёçе кёртнё çёрте, заводсен ёçне контроль туса тăрассинче халех ёнтё пысăк вырăн йышăнса тăраççё. Елёкрех çавнашкал заводсен продукцин тĕп массине уйăх вёçёнче туса кăларнă пулсан, халё вара вёсенчен нумайёшё график тăрăх ёçлеме тата продукцие кунсеренех задани панă хисеп чухлё туса кăларма пуçлаççё.

Мёншён-ха, юлташсем, пирён мёнпур наркоматсенче те çавнашкал йёркех тăвас мар тата предприятисен ёçне кунсерен контроллес ёçе организацилес мар? Ёçе çакăн пек йёркелеме пигех те май пур вёт: халăх комиссарё, ирхине ёçе пырсан, заводсем ёнер мён чухлё продукци туса кăларни çинчен кёске справка илтёр.

ТЕХНОЛОГИ ДИСЦИПЛИНИ ÇИНЧЕН. Пирён предприятисен ёçёнчи пысăк ситменлёк вăл—технологи дисциплини янăххи, производствăн тĕплĕн туса хатĕрленё технологийё çукки, çирĕплетсе панă чертежсенчен хăйсен ирёкёпех пăрăнни тата конструкцисене малтан тĕплĕн сăнаса пăхмасăр, ответлăха туйăмсăр улăштарни пулса тăрать. Нумай заводсенче производствăн çирĕплетсе панă технологиллё режимне хăйсен ирёкёпех пăсаççё, обработка меточёсене улăштараççё, допускисен çирĕплетсе панă виçисене пăхăнмаççё.

Заводсен директорёсем, главнăй инженерсемпе главнăй технологсем технологи инструкцийёсене мёнле пăхăнса пынине япăх контроллеççё, чертежсене тĕп-тĕрёс пăхăнса пынине асăрхаса тăмаççё, технологиллё документацине чертежсене çирĕплетес ответлăран та ответлă ёçе иккёмёш вырăнта тăракан работниксене шанса параççё.

Шăпах ёнтё, çавна пула, документаци тата изделисен чертежёсем (технологи процесё вёсем тăрăх пулса пымалла) час-часах арпашăнса пётнё, производствăн документсем çине çырнă технологийё вара ёçленё вырăнта тĕрёссипе ёçе кёртнинчен урăхла пулса пырать.

Технологи дисциплинине пăхăнса пырасси çине, чертежсемпе конструкцисене тĕп-тĕрёс пăхăнса пырасси çине çавăн пек çăмăлтăйланса пăхни акă ăçта илсе пырать: сериллё производствăра пĕр пек мар пахалăхлă продукци туса кăлараççё, машинăсемпе механизмсен стандартлă деталёсем пĕр-пĕрне улăштарма юрăхлă пулмаççё. Технологине улăштарас ёçсене тата чертежсене никама пăхăнмасăр хăтланни час-часах юрăхсăр продукци туса кăларасси патне тата оборудованине кирлё мар ёçпе тултарса лартасси патне илсе пырать.

Юлашки çитес номерте пулать.

ПИРЁН СЕРГО

Г.К. Орджоникидзе юлташ вилни 4 ҫул тултарнă тĕле

1936 ҫулта кĕрхи куҫсенче, ҫĕршыв Серго Орджоникидзе ҫуралнăранна 50 ҫул тултарнине паллă тунă вăхăтра, Серго Орджоникидзе патĕнче унăн Терек таврашĕнчи ĕлĕкхи юлташĕсем, ингушсем-партизансем пулнă. Вĕсем Серго валли пысăк ҫыру илсе пынă, ҫыру ҫине ҫапла ҫырнă: «Ирĕке кăларакана тата туса, тăван Серго Орджоникидзене — ингуш халăхĕнчен». Ҫыру переплет ăшĕнче пулнă, переплет ҫинче авалхи ингуш аулне кăтартнă. Сăртсем хыҫĕнчен тухакан ҫапҫутă хĕвел ҫав аула ҫутатса тăрать, вăл аулри ҫынсем ĕлĕк тĕттĕмлĕхре пурăннă, халĕ вĕсем пачах урăхла пурăнаҫҫĕ. Çак ҫыру ҫавăн пек нумай ауле витĕр тухнă. Ана сăртсем урлă, пĕр чăнкă сăртран тепĕр чăнкă сăрт урлă тирпейлĕн илсе пынă. Ҫыру вĕҫĕнче ҫĕнĕ те ҫĕнĕ ҫынсем алă пуснă. Хутла пĕлмен ватă стариксем пуҫпурнисемпе чернил пуҫса илнĕ те вара ҫыру ҫине пуснă. Алă пуснипе халăх хăйĕн пĕтĕм пурнăҫне ĕҫҫыннисен телейĕшĕн кĕрешес ĕҫе панă ҫынна юратнине, ҫавăн пек ҫынна воспитани парса ӳстернĕ партие юратнине кăтартса панă.

Серго Кавказри халăхсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешни — çак чаплă большевикăн пурнăҫĕнчи чи уҫă страницăсенчен пĕри кăна-ха. Ингушети сăрчĕсенче Сергона «уҫă сокол» тесе чĕннĕ. Вăл чăннипех те уҫă сокол пулнă, кĕрешӳре хăюллă та ним пăрканланман, шиксĕр те ҫирĕп пулнă. Унăн пурнăҫĕ чаплă та ывăр, унăн пурнăҫĕнчи кашни страница геройла страница пулса тăрать.

* * *

1905 ҫул. Тинĕс хĕррипе Военно-Сухумски шоссе тăрăх арба пынă, унта улăм ҫинче ҫамрăк Серго выртнă. Полици йĕрленĕ пирки вăл Абхазири Гудауты ялне пурăнма куҫма шутланă. Вăл тĕмĕрен те нумаях пулмасть кăна тухнă-ха. Полици ăна тахҫанах, шкулта вĕреннĕ чухнех, учета илнĕ. 19 ҫулхи ҫамрăк ку таринччен ĕнтĕ виҫĕ ҫул хушши пытанса активлăн ĕҫленĕ; Тифлисра, Батумра тата ытти вырăнсенче вăрттăн митингсемпе массовăсем ирттернĕ. Пĕр пухăва вăл чиркӳ картишĕнче ирттерме ăс тупнă. Ҫĕрле уйăх ҫутинче вăл рабочисене Сталинăн брошюрине вуласа панă. Çакна пĕлсен полици урсах кайнă.

Арестлени Сергона хăратайман. Вăл Гудауты ялĕнче революциллĕ ĕҫе вăйлăн туса пынă. Чухăн ял ҫамрăк фельдшер пынишĕн савăннă. Абхази хресченĕсем тата грузчиксем Сергопа ҫирĕппĕн туслашнă. Вĕсем ун патне медицина енĕпе пулăшу илме кăна мар пынă. Рецептпа пĕрле Серго хăшне-пĕрне вăрттăн кăларнă брошюрăпа прокламацисем те тыттарнă. Гудаутра парти организацийĕ хăвăрттăн ӳснĕ, партин Сухумри комитечĕн членĕ Серго ертсе пынипе вырăнти власҫсем сăмси айĕнчех хăюллă, анчах хăрушă предприяти туса пынă. Çакна вырăнти власҫсем асăрхаман та. Ҫĕрле пулсан вара Серго фелюгсенчен ютҫĕршывсенчен кӳрсе килнĕ хĕҫпăшалсене пушатма пулăшнă, ирхине каллех вăл, савăнăҫлăскер, хăйĕн патĕнче больницăра ҫынсене йышăннă...

1906 ҫулта январь уйăхĕнче пĕр ҫĕрлехине Сергопа унăн юлташĕсене полици ярса илнĕ. Арестленисене Сухума илсе кайнă, вĕсене 60 казак хуралласа пынă.

Ҫурҫул иртсен Серго тусĕсем ăна тĕрмерен тухма пулăшнă. Вăл вара Тифлиса тарнă, кунта 1906 ҫулта ҫулла хĕрарăмсен училищин подвалти пӳлĕмĕнче, «Дро» («Время») ятлă большевикла хаҫат редакцийĕ вырнаҫнă ҫĕрте, Серго пирвайхи хут Сталинпа тĕл пулнă. Вĕсем нумайччен калаҫнă. Серго хăйне пур енчен те кăмăллă туйнă: Закавказьере большевикла организацине тăвакан ҫынпа калаҫни ăна ҫĕнĕ вăйсем панă.

Тепĕр кунне Серго каллех Сталин патĕнче — «Дро» хаҫата пичетленĕ типографире пулнă. Хăйĕн брошюрисенчен пĕрине — РСДРП-ăн Стокгольмри съезчĕ ҫинчен ҫырнă брошюрине Сталин Сергона панă. Брошюрине ан-

чах пичетлесе кăларнă, унран типографири краска шăрши те сӳрĕлсе пĕтмен пулнă. Хăйĕн брошюринче Сталин соглашатель-меньшевиксене ҫавтери хыттăн ҫапнă, Сталинăн ҫав вирлĕ сăмахĕсене Серго массăсем хушшине сарнă. Сталинпа тĕл пулни, Сталин ертсе пынипе ĕҫлени Сергона пур енчен те ҫирĕппĕн ӳсме пулăшнă.

Реакци ҫулĕсем. Серго каллех тĕрмере. 1908 ҫулти ҫуркунне ăна ĕмĕрлĕхех Çĕпĕре ссылкăна ямалла тунă.

* * *

Çĕпĕрти тайга. Ангара шывĕ хĕрринче ҫын утса тухма пултарайман юр тултарса лартнă ҫĕрте Потоскуй тата Погорюй ятлă ялсем пытанса ларнă. Çак тĕттĕм вырăнта патша власĕсем Сергона ĕмĕрлĕхех тĕп тума шутланă. Чугунҫул патне ҫитиччен ҫĕршер ҫухрăм шутланнă — кунтан тараймăн, вĕҫеренеймĕн. Анчах Серго пусăрăнман. Хăйне пĕрле ссылкăра пурăнакан юлташĕсен кăмăлне ҫĕклесе, вăл шӳт туса ҫапла каланă:

— Нимĕн те мар. Пире ҫакăнта яракансем акă часах хăйсем ҫакăнта кулянса тата хуйхăрса ларĕҫ. Енеперĕн мана, юлташсем!

1909 ҫулта Серго ссылкăран тарнă. 1910 ҫулта вăл ютҫĕршывсене тухса кайнă. Парижра вăл чи пирвайхи хут Ленинпа тĕл пулнă, унччен малтан унпа ҫырусем яра-яра илнĕ.

Владимир Ильич Сергона пысăккăн хаклана. Сергора вăл большевикла партин чи ҫирĕп работникĕсенчен пĕрине курнă. Пĕр вăхăт хушши Серго Лонжюмра Ленин тунă партшкулта вĕреннĕ, унта вăл философие, историе, марксизм классикĕсен ĕҫĕсене вĕреннĕ, кайран Ленин панă ответлă порученипе Российăна килнĕ. Ленин ăна вырăнти организацисене партин пĕтĕм Российăри конференцине хатĕрлеме хушнă. Серго Сталин патне васкана, анчах унпа тĕл пулайман. Сталина полици арестленĕ. Сталин пуҫланă ĕҫе Серго туса ҫитерет. Крайран края, хуларан хулана куҫса ҫӳресе, вăл ун чухнехи пĕтĕм Россия витĕр тухнă, пур ҫĕрте те вырăнти организацисемпе ҫыхăннă, большевикла вăйсене пĕтĕҫтернĕ. Партин 1912 ҫулта Прагăра пулнă пĕтĕм Российăри конференцийĕ большевикла парти историйĕнче калама ҫук пысăк вырăн йышăннă, «вăл большевиксемпе меньшевиксене пĕр-пĕринчен татăклăнах уйăрса, пĕтĕм ҫĕршывĕпех большевикла организацисене пĕрлĕхлĕ большевикла партие пĕтĕҫтернĕ». (Сталин). Çак ĕҫре Сергон та тава тивĕҫлĕ ĕҫĕ пысăк.

Прагăри конференци хыҫҫăн Серго каялла Российăна тавăрăннă. Ссылкăран тарнă Сталин юлташпа пĕрле Серго Закавказьери мĕнпур организацисенче пулнă, унтан вĕсем Мускава тата Петербурга кайнă. Вĕсене тытас шутпа охранка агенчĕсем пĕтĕм вăя хунă, анчах Сталинпа Серго, патша охраникĕсем вĕсене ăҫта сахалтарах кĕртнĕ, вĕсем яланах ҫавăнта пулнă. Провокаторсем пулăшнипе охранниксем, юлашкинчен, Сталинпа Сергона йĕрлесе тупнă. 1912 ҫулта апрель уйăхĕнче Сталина арестленĕ, тепĕр пиллĕк кунтан охранка аллине Серго та лекнĕ. Ана Шлиссельбургри крепоҫе хупса лартнă.

Виҫĕ ҫул хушши пĕччен асапланса пурăннă вăхăтра тата ун хыҫҫăнхи ҫулсенче инҫетри Якутире ссылкăра 1917 ҫулчченех пурăннă вăхăтра Серго теорине вĕреннĕ, малашнехи татăклă сапăҫусене хатĕрленнĕ,

1917 ҫулти февральти революци Сергона ссылкăран ирĕке кăларсан, вăл каллех парти ĕҫĕмĕн кĕрешекен боецсен пĕрремĕш речĕсенче пулнă. Тĕрмесенче, каторгăра тата ссылкăсенче пулнине пăхмасăрах, вăл яланхи пекех ҫирĕп, тулли вăй-халлă пулнă.

* * *

Якутирен Петрограда ҫитме Сергон виҫĕ уйăх ытла вăхăт иртнĕ. Вăл ҫывхарса ҫитнĕ революци центрне, — большевиксен партийĕ, Ленинпа Сталин ертсе пынипе, массăсене капитализма штурмлама хатĕрленĕ ҫĕре ҫитме васкана. Кунта Серго мĕнпур вăйпа революциллĕ ĕҫе тытăннă. Нарва заставинчи заводсемпе казармăсенче меньшевиксемпе эсерсене хирĕҫ кĕрешнĕ ҫĕрте Серго ленинла лозунгсемшĕн пĕтĕм вăйран тăнă. Серго партин Петроградри Комитечĕн тата Петроград Совечĕн Исполнительнăй Комитет членĕ пулнă.

Июльри событисем хыҫҫăн Владимир Ильичăн пытанса пурăнса ĕҫлемелле пулнă. Керенскин контрреволюциллĕ правительстви тата унăн тарҫисем — меньшевиксемпе эсерсем — большевиксен партийĕпе унăн ҫулпуҫĕсем тĕлĕшпе темтепĕр киревсĕр ĕҫсем тунă. Ленинпа ҫыхăну тытасси йывăрланнă, ăна шиксен аллине лектерес мар тесе питех те ăслă конспираци тумалла пулнă. Çакна тума шанчăклă ҫынсене кăна хушма пулнă. Сталин юлташ çак ĕҫе тума Сергона хушнă.

Ленин ун чухне Разлив станцийĕ патĕнче пытанса пурăннă. Серго ун патĕнче икĕ хутчен пулнă. Пĕррехинче Владимир Ильичпа тĕл пулнă хыҫҫăн Серго ҫапла каласа кăтартнă:

«Владимир Ильич, эпĕ каласа панисене итленĕ тата чылай ыйтусем панă хыҫҫăн, ҫапла каларĕ:

«Меньшевикла советсем хăйсене хăйсем дискредизацилерĕҫ. Икĕ ярне каялла вĕсем влаҫа пысăк вăй хумасăрах илме пултарнă. Халĕ ĕнтĕ вĕсем власть органĕсем мар. Влаҫа вĕсенчен туртса илнĕ. Халĕ ĕнтĕ влаҫа хĕҫпăшалла восстани тунипе кăна илме пулать, вăл восстани нумай кĕттерсе тăратмасть...»

Çаксене йăлтах эпĕ пысăк тимлĕхпе итлерĕм. Питех те пысăк шухăша кайрăм. Пире анчах хыттăн ҫапнăччĕ, анчах вăл тепĕр уйăхран е иккĕрен ҫĕнтерӳллĕ восстани пулассине пĕлсе тăнă!

1917 ҫулти октябрьти аслă кунсем ситсе тăнă. Серго — боевой постра. Пулковски патĕнчи высотасенче, Керенскин тата Красновăн контрреволюциллĕ войскисемпе хаяррăн ҫапăҫнă ҫĕрте Серго Орджоникидзе пурнăҫĕнче ҫĕнĕ тапхăр пуҫланнă; большевикла комиссарăн ҫар шинелĕпе тата шлемĕпе вăл граждан вăрҫин мĕнпур татăклă фрончĕсем витĕр тухнă.

* * *

1918 ҫулта ҫулла Терек йывăр кунсене пурăнса ирттернĕ. Сăртсем ҫинчи халăхсене ĕмĕр-ĕмĕр хушши пĕрпĕрине курайманлăх уйăрса тăнă, казаксене хирĕҫ юнлă вăрҫăна хĕтĕртнĕ. Аулсемпе станицăсенче ҫулăм ялкăшнă. Хире винтовкăсăр тухма хăрушă пулнă. Донпа Кубань патĕнчен Деникин войскисем хупăрласа килнĕ.

Çак хăрушă та йывăр кунсенче парти Орджоникидзе юлташа Кăнтăр Российăна чрезвычайнăй комиссар туса янă. Пысăк мар бронепоездпа Серго Терек патне пырса ҫитнĕ те ĕҫсынни горецсемпе казаксен тапăнса пыракан контрреволюцие хирĕҫле кĕрешĕвне пуҫарса ертсе пынă. Серго вагонĕ Владикавказ станцийĕнче тăнă, вăл вагон унăн штабĕ пулнă: кунтан фронта боевой приказсем туха-туха кайнă, кунта инҫетри аулсенчен горецсем пынă, вĕсем Сергоран ҫакна пĕлесшĕн пулнă: ăна чăнахах Ленин янă-ши, Ленин чухăнсене чăнахах ҫĕр пама хушнă-ши. Иртен пуҫласа мĕн сĕм ҫĕрлеченех вагон ăшĕнче Терекри нумай наци-ллĕ халăхсен чĕлхипе каласҫни илтĕнсе тăнă.

Серго приказĕ тăрăх Терекри ҫирĕм сакăр народноҫсен делегачĕсем 1918 ҫулти июль уйăхĕн вĕҫĕнче Владикавказа съезда пуханнă. Тул ҫутăлса ҫитсен шурă казаксем хула ҫине кĕтмен хушăран пырса тапаннă. Пĕтĕм съезд хĕҫпăшалланнă та окопсем туса вырнаҫнă. Хулара пăшалсенчен персе тăни вунă кун хушши хула пынă. Серго ишгушсене пулăшма чĕннĕ тата сапăҫу ĕҫĕсене тӳрремĕнех хăй ертсе пынă. Шурă казаксене ҫĕмĕрсе тăкса, вĕсене Владикавказран хăваласа кăларса янă.

Сергон Терек патĕнчи боевой, ҫар тата политикăллă ĕҫĕ яруҫă эпизодсемпе тулса ларнă. 1919 ҫул пуҫламĕшĕнче Деникин Владикавказа йышăнсан, Серго хĕллехи ҫил-тăвăлсем витĕр Кавказ хребечĕ урлă питех те йывăр ҫулпа тухнă, Тифлиса, унтан Бакуна ҫитнĕ, Бакуран вара пулăҫсен лодкипе Каспий тинĕсĕпе Астрахане пырса ҫитнĕ. Кунта вăл пирвайхи хут Кировпа тĕл пулнă.

Астраханьрен Серго Мускава, Ленинпа Сталин патне кайнă. Вăл Сталинăн Деникина ҫĕмĕрсе тăкмалли планне пурнăҫа кĕртес ĕҫе тӳрремĕнех хутшăннă, геройла XI-мĕш арми пуҫĕнче пулса, Кировпа пĕрле Баку патне ҫитиех ҫĕнтерӳллĕ ҫул туса тухнă. Нумай ҫулсем иртсен, 1936 ҫулта Азербайджан делегацине йышăннă чухне Серго трибуна ҫине хăпарсан, Сталин юлташ ăна ҫапла каласа саламланă: — Салам Азербайджана ирĕке кăларакана! Вăл Азербайджана чикамран малтан пырса кĕнĕ.

* * *

1926 ҫулта Серго ЦКК-РКИ руководителĕ пулса тăнă. Çак вырăна Сергона пирĕн ҫĕршывăн чи ответлă тапхăрĕнче, Советсен ҫĕршывĕ халăх хуҫалăхне ура ҫине тăратнă тапхăртан ҫĕнĕ тапхăра, индустриализаци тапхăрне куҫнă вăхăтра, лартнă пулнă. Шăпах ҫав самантра ĕнтĕ троцкистла-зиновьевла блок предателĕсем партипе сохет власне хирĕҫ кĕрешессине вăйлатнă пулнă.

Тăван ҫĕршывăн ирсĕр изменникĕсене, капитулянтсене Серго калама ҫук хыттăн ҫапнă, социализм тăшманĕсене ҫĕмĕрсе тăкнă. Парти пĕрлĕхне вăл куҫ шăрҫине сыхланă пекех сыхланă, унăн генеральнăй линийĕшĕн мĕнпур вăйпа тăнă.

Партин XV съезденче Орджоникидзе юлташ съезд суйланă комисси ячĕпе троцкистла-зиновьевла блока пĕтерсе тăкни ҫинчен доклад тунă. Орджоникидзе юлташ съезда комисси решенийĕ ҫинчен, троцкизмăн лидерĕсене тата троцкистла-зиновьевла блокăн мĕнпур активлă деятелĕсене партинчен кăларма йышăннă решени ҫинчен пĕлтернĕ. XV съезд предательсемпе двурушниксене ВКП(б) ретĕнчен кăларнă.

Троцкистла-зиновьевла контрреволюциллĕ блока аркатса тăкнă хыҫҫăн, часах капитализмăн сылтăм реставраторĕсем пуҫĕсене ҫĕкленĕ, вĕсене троцкистла-зиновьевла двурушниксемпе пĕрлешсе кайнă Бухарин, Томский тата Рыков ертсе пынă.

Серго Орджоникидзе çак тапхăрта та кулакла агентсене большевикла мĕнпур хаярлăхпа аркатса тăкнă, çав агентсен реставраторла планĕсемпе тĕп шухăшне тăрă шыв ҫине кăларса палăртнă.

1930 ҫулти декабрьте Орджоникидзе юлташа ЦК ВКП(б) Политбюро членĕсен составне кĕртнĕ.

Çар тата политикăллă деятелĕн талантне Серго хозяйственник таланчĕпе чаплăн ҫыхăнтарнă. 1930 ҫулта социализмлă промышленноҫăн командармĕ туса хурсан, Серго пурнăҫĕнче ҫĕнĕ тапхăр пуҫланнă. Йывăр промышленность тăвассишĕн, ҫĕршыва индустриллĕ хăватлă ҫĕршыв туса хурассишĕн аслă кĕрешӳ вăйлăн сарăлса пынă. Ĕҫре ывăнма пĕлмен Серго ҫĕнĕ стройкăсемпе заводсенче пулса, вĕсен ĕҫне тĕрĕсленĕ, ҫитменлĕхсене пĕтернĕ.

Сад хуҫи хăйĕн садне мĕнле тăрăшса пăхса тăрать, Серго та йывăр промышленность кадрĕсене ҫавăн пек тăрăшса, ҫине тăрса пăхса ӳстернĕ.

1935 ҫулта шахтер Алексей Стаханов отбойнăй мăлатукпа хăюллăн ҫапса кивĕ, пăрахăҫа тухнă нормăсене ҫĕмĕрсе, ҫĕнĕ, тĕнчере курман ĕҫ тухăҫлăхĕн социализмлă нормисене тăвать. Ирхине шахтăна телеграмма пырса ҫитнĕ. Серго Стаханова, историллĕ движенине пуҫласа яракана сывлăх сунса саламланă.

Хăйĕн хуҫалăхлă мĕнпур ĕҫĕнче Серго Орджоникидзе ĕҫĕн социализмлă пысăк тухăҫлăхĕшĕн, техникăна вĕренсе алла илессишĕн, ĕҫĕн культуришĕн кĕрешнĕ.

Серго яланах ҫапла вĕрентнĕ, ҫапла тума ыйтнă: тимĕр пек ҫирĕп дисциплинăсăр социализмлă промышленность малалла кайма пултараймасть советăн пĕтĕм продукцийĕ пысăк пахалăхлă пулмалла.

Серго хăй умне те ҫирĕп требованисем лартнă, ыттисем умне те çавăн пекех ҫирĕп требованисем лартнă. Кашни предприятин тĕптĕрĕс, пĕр чарăнмасăр, сехет механизмĕ пек ĕҫлемелле. Производствăллă мĕнпур майсемпе туллин усă курасси, ҫирĕп учет тата контроль, ҫĕнĕ техника мĕн пама пултарнине унран йăлтах илесси, — акă санăн задача — тесе каланă Серго кашни хозяйственника тата парти ĕҫĕнчи кашни работника. Тирпейлĕх, перекетлĕх, пысăк пахалăх, ĕҫри культурăлăх, тимĕр пек ҫирĕп дисциплина татах тепĕр хут дисциплина. Çаксемсĕр пуҫне ҫĕнтерме çук.

Орджоникидзе юлташ государствăлă тата хуҫалăхлă мĕнпур ĕҫ ҫине парти хушнă пек пăхнă, ыттисене те çавăн пек пулма вĕрентнĕ вăл.

Серго час-часах: эпир тунă ҫитĕнӳсемпе нимĕн чухлĕ те лăпланса ларма пултараймастпăр, нимĕн чухлĕ те мăнкăмăлланма пултараймастпăр, тесе асăрхаттарнă.

«Мăнкăмăллании,—тесе каланă Орджоникидзе юлташ темиҫе хутчен те, — культурăсăрлăха кăтартни кăна пулать».

Серго Орджоникидзе социализм тăшманĕсем ҫине — троцкистла-бухаринла шпионсемпе ҫынвĕлеренсем ҫине мĕнпур хаярлăхпа пăхнă.

Вилес умĕн кăшт маларах, нефтепе регоннăй промышленноҫри инженерно-технически работниксен делегацине йышăннă ҫĕрте каланă сăмахра вăл татах та татах ҫивчĕ куҫлă пулма, сыхăлăхлă пулма чĕннĕ, вăл тăшмана тупса палăртма тата «тăшман пирĕн хушăмăра кĕме ан пултартăр, тăшман пире сиен тума ан пултартăр» тесе ăна ҫирĕппĕн сăнаса тăма чĕннĕ.

Социализмлă индустрин командармĕ пулса ĕҫленĕ вăхăтра Серго Орджоникидзе совет государствин хуҫалăх тата çар никĕсне хывса пынă. Уйрăмăнах вăл пирĕн геройла Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне вăрҫăн кучухнехи вĕрҫĕнĕ средствисемпе пуянлатассипе сыхăнса тăракан промышленность отраҫлисемшĕн çавтери вăйлăн тăрăшнă.

1935 ҫулта Советсен VII съезденче Орджоникидзе юлташ ҫапла каланă: «йывăр промышленность ҫĕршыв оборони тĕлĕшпе хăйĕн обязательствисене пурнăҫлама хатĕр. Вăл, пирĕн аслă тăван ҫĕршыв чиккисене пирĕн тăшмансем пырса тĕкĕнме пултрамалла мар тăвас тĕлĕшпе, хамăран Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине йăлтах парĕ».

Серго Орджоникидзен çак сăмахĕсем пурнăҫа кĕнĕ, вĕсем ҫĕршер те пиншер самолетсенче, танксенче, тупăсемпе пулеметсенче, вуншар боевой карапсенче курăнса тăраҫҫĕ, çав самолетсем, танксем, тупăсемпе пулеметсем тата карапсем пирĕн мухтавлă хĕрлĕ воинсен аллинче хăрушă вăй пулса тăраҫҫĕ, çак вăй аслă совет халăхĕн мирлĕ пурнăҫне шанчăклăн сыхласа тăрать.

* * *

1937 ҫулти февралĕн 18-мĕшĕнче пирĕн ҫĕршывăн пачах кĕтмен ҫĕртен Серго Орджоникидзен ҫулăмлă, чаплă чĕри тапма чарăнчĕ.

... Сергона пытарнă кун пулнă траурлă митингра Ленин мавзолейĕ ҫинчи трибуна ҫинчен Алексей Стаханов сăмах каланă. Вăл:

«Серго пек ҫынсем вилмеҫҫĕ. Вăл халăх чĕринче ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнать».

Çакăн пек калать пĕтĕм совет халăхĕ. Çакăн пек калать пĕтĕм парти хăйĕн юратнă ҫынни, хăйĕн шанчăклă ывăлĕ — Серго ҫинчен.

З. ФАЗИН.

Тĕнче пуҫламĕшĕ пулнă-и тата тĕнче пĕтет-и?

Тĕнче пуҫламĕшĕ ҫинчен, тĕнче пĕтесси ҫинчен тăракан ыйтупа кучухнехи этемлĕх кăна мар интересленет. Çак ыйтупа пиртен малтан пурăннă пур халăхсем те интересленнĕ, вĕсем пĕлесшĕн пулнă: мĕнле ялапа вăл пĕлĕт, мĕнле ялапа вăл ҫĕр? Çакăнпа пĕрлех халăхсем тĕнче мĕнле пуҫланса кайнине интересленнĕ, вĕсене çак ыйту шухăшлаттарнă: тĕнче ĕмĕр-ĕмĕрех пырать-и, е вăл пĕтесе ларать?

Çак ыйтусем тăрăх тĕрлĕ халăхсем тĕрлĕрен шухăшланă, мĕншĕн тесен вĕсен культурăллă тата обществăллă аталанăвĕсем пĕр пек пулман. Çапла, сăмахран, тахҫан авал пурăннă сахал культурăллă халăхсем пĕлĕтпе ҫĕр ҫинчен йăлтах ачалла шухăшланă. Сăмахран, пирĕн эра пуҫланиччен 30—20 ĕмĕр ĕлĕкрех пурăннă Вавилон халăхĕсем, çавăн пекех Египет халăхĕсем: ҫĕр вăл тарелка евĕрлĕ мăкăрăлса тăракан утрав пек ялапа, ăна шыв хупăрласа тăрать, тесе шутланă. Пĕлĕт вăл—ҫĕнтерĕ купол пек хытă ялапа, вăл ҫĕр хĕрри ҫине тĕренсе тăрать, тесе шутланă. Çăлтăрсене вара пĕлĕт сумне сакса хунă ҫутăсем вырăнне шутланă.

Палăрах ĕнтĕ, хăйсене хупăрласа тăракан пĕлĕт мĕнлине, хăйсем пурăнакан ҫĕр мĕнлине пĕлме пултарайман халăхсем, тĕнче мĕнле пуҫланса кайни ҫинчен тĕрĕс шухăшлама пушшех те пултарайман. Çакăнпа усă курса, пуҫмăрта пурăнакан ҫынсене пăхăнтарса тăрас шутпа, Вавилон жрецĕсем тĕнчене турă туни ҫинчен калакан халлап шухăшласа каларнă. Çак легенда вăл—ун чухне пулнă тĕне ҫĕнетни, малалла аталантарни, вăйлатни пулнă, вăл пуҫмăр айĕнчи классене пуҫмăрта тытса тăмалли пĕтĕм сăнчăрăн пĕр пайĕ пулнă. Турăпа тĕн мĕнле пуҫланса кайни ҫинчен тăракан ыйтăва пăхса тухҫа, Ленин тĕнĕн класлă рольне пур енчен те уҫҫăн ҫутатса панă. «Пуҫмăрлакан классене,—тенĕ вăл,—хăйсем пуҫпулса тăмалли положение сыхлама социаллă икĕ функци кирлĕ: палач функцийĕсем тата поп функцийĕсем. Палач пуҫмăртисен протестне тата вĕсем ҫилленсе тарăхнине путарса пыма тивĕҫлĕ, поп... вĕсене пуҫпулса тăракансемпе килĕштерме... вĕсен революциллĕ шухăш-кăмăлĕсене ҫĕмĕрсе пыма тивĕҫлĕ». Çапла ĕнтĕ, турă рольне мухтани жрецсемшĕн кирлĕ пулнă. Туррине хăйне вара, Ленин калани тăрăх, ҫутҫанталăкпа кĕрешме вăй ҫитереймен дикарь шухăшласа кăларнă. Каярахпа эксплоататорла классем, пуҫмăр тӳсекен классене йăпатма, татах та ытларах эксплоатацилеме май пултăр тесе, ҫын валли пĕлĕт ҫинчи иккĕмĕш пурнăҫа шухăшласа кăларнă, кам ҫĕр ҫинче эксплоататорсемпе хирĕҫмесĕр пурăнать, вилнĕ хыҫҫăн ҫавсене пурне те турă пĕлĕт ҫинче ырă пурнăҫ парать, тесе ултăлама пуҫланă, çакăнпа вара турă рольне татах та ытларах вăйлатнă. Çак легенда темиҫе ĕмĕр хушши ăруран ăрăва куҫса пынă, каярахпа вăл библи халлапне пуҫласа ямалли тĕп материал пулса тăнă. Çак легенда каланă тăрăх, пĕтĕм тĕнчене турă пĕр сăмах каласа «нимĕн ҫукранах» ултă кун хушшинче тунă пулать. Паллах вĕннĕ, хăйсем тĕллĕн ҫутăлман, хыта планетăсем те пур, тахҫан авал вĕсем те, ҫăлтăрсем пекех, ҫутăлса тăракан, вĕри ялаласем пулнă. Хĕвел тавра ҫаварăнакан чи пысăк, сивĕннĕ планетăсем тăххăр шутланаҫҫĕ, вĕсенчен пĕри—ҫĕр. Пирĕн планета сивĕнсе пынă май ун ҫинче пурнăҫ ataланса пынă. Пурнăҫ хăй тĕллĕн ataланса ҫуралма пултарнăне наука тахҫанах кăтартса панă, органикăллă мар ялаласенчен органикăллă ялаласем пулса тăма пултарнине опытсем туса палăртнă.

Юлашки тĕпчевсемпе телескоплă сăнавсем çакна ĕнентерӳллĕхпе кăтартса панă: пирĕн Çĕрпе кӳршĕллĕ Марс планета ҫинче те пурнăҫ пур, тепĕр планета Венера ҫинче пурнăҫ валли кирлĕ условисем йăлтах пур. Çапла ĕнтĕ, наука кăтартса панă тăрăх, эпир çапла шутласан пĕр йăнăш та тумастпăр: Çĕр ҫинче тата Хĕвел системинчи ытти планетăсем ҫинче кăна мар, тĕнчери ытти миллионшар планетăсем ҫинче те пурнăҫ пур.

Çапла вара кучухнехи наука ҫутҫанталăка тĕпчесе сăнаннинчен çакă курăнать: тĕнчене турă туман, вăл—ĕмĕр-ĕмĕрех движенире пыракан, ĕмĕр-ĕмĕрех улшăнса тата ataланса пыракан материн, ҫутҫанталăкăн, ялалан продукчĕ.

* * *

Тĕнче пĕтессипе пĕтмесси ҫинчен тăракан ыйту та çавăн пекех интереслĕ. Кам наукăна вĕренсе алла илнĕ, урăхла каласан, кам ҫутҫанталăка тытса тăракан законсене пĕлет, çавă тĕнче кунҫулĕ малашне мĕнле пулассине пĕлсе тăма пултарать. Анчах тĕн ҫынна çавăн пек пĕлӳлĕхсем паммасть, мĕншĕн тесен вăл, Сталин юлташ калани тăрăх, наукăна хирĕҫ пыракан ялала. Тĕн пушă сăмахсемпе ĕнентерсе калать, хăй каланине сукăр ҫын пек ĕнемне хушать, вăл ĕнентерсе каланине, тесе вĕрентеҫҫĕ чирку ҫыннисем, пĕр иккĕленмесĕр ĕненмелле, ăна ҫынăн ăсхакăлĕ контроллеме тивĕҫлĕ мар. Çапла, сăмахран, христианла кĕнекере «Апокалипсисра» çапла каласа панă: темĕнле Иоанн апостола тĕлĕнмелле япала курăннă, ăна турă тĕнче хăрушла пĕтесси ҫинчен каласа панă пулать. Тĕнче пĕтнĕ чух çĕр ҫунма пуҫлать, хĕвелпе çăлтăрсем çĕр ҫине ӳкеҫҫĕ, аслати авăтать, ҫиҫĕм ҫиҫет, çĕр чĕтренет, ҫынсем пĕтеҫҫĕ пулать т. ыт. те. Тĕнче пĕтесси ҫинчен ĕнентерсе каланă çĕрте тĕн пĕр çак тĕлĕнмелле тĕлĕкпе кăна усă курать, урăх унăн нимĕн те çук.

Çак тĕлĕк тĕнче пĕтесси ҫинчен ĕнентерме пултарать-и? Паллах, çук. Наука çакна ĕнентерӳллĕнех кăтартса панă: тĕнчере нимĕнле япала та пĕтмест, япалан форми кăна улшăнать. Сăмахран, уран ятлă металран хăй тĕллĕнех тăхлан пулса тăрать т. ыт. те.

Чăнах та, наука хăех калать, хăçан та пулин Хĕвел сивĕннĕ хыҫҫăн, Çĕр ҫинче пурнăҫ пĕтет. Анчах Çĕр ҫинче пурнăҫ пĕтни вăл пĕтĕм тĕнчери пурнăҫ пĕтнине пĕлтермест. Пурнăҫ тĕнчери ытти миллионшар планетăсем ҫинче юлать. Çĕр ҫинче пĕтнĕ пурнăҫ вырăнне, вĕри çăлтăрсем сивĕнсе пынă май, пурнăҫ ытти çĕршер те пиншер планетăсем ҫинче татти-сыпписĕр çуралса пырать.

Наука ҫапла калать: пайтах вăхăт иртнĕ хыҫҫăн Хĕвел сӳнет, ăшăпа сутă пама пăрахать. Анчах çакă вăл пĕтĕм тĕнче пĕтнине пĕлтермест. Пĕтĕм сутҫанталăк пурнăҫĕ маллах пырать. Сӳннĕ Хĕвел вырăнне ăҫта та пулин урăх вырăнта мĕнле те пулин ҫĕнтерсе Хĕвелсем—çăлтăрсем ҫуралса тухаҫҫĕ.

Тĕнчере ҫĕнни ҫуралса, кивви пĕтсе пырать. Сăмахран, Хĕвел ҫутă пайăркисен энергийĕпе пĕрле талăкра 360 миллиард тонна матери сирпĕтсе каларать. Хĕвел хăй ăшĕнчи япаласене малашне те хальхи вăхăтри пек хăвăртлăхпах сирпĕтсе каларас пулсан та, Хĕвел 15 биллион ҫултан кăна сапаланса пĕтме пултарать. (Биллион вăл—миллион хут миллион). Анчах нумай çăлтăрсем Хĕвелтен те нумайрах матери сирпĕтсе калараҫҫĕ.

Çак сирпĕтсе каларакан энергипе матери пĕр йĕрсĕр сухалать-ши, е вăл тĕнчери ăҫта та пулин урăх ҫĕрте пулать-ши? Паллах, вăл пĕр йĕрсĕр сухалмасть, вăл çăлтăрсем хушшинчи пĕр-пĕр ҫĕре капланса пухăнать, пĕрпаллă условисенче вара вăл энергипе материн питех те вĕтĕ материаллăй частицăсем пулса тăраҫҫĕ: электронсемпе протонсем ҫуралса тухаҫҫĕ, вĕсенчен вара химиллĕ элементсен атомĕсем пулса тăраҫҫĕ. Çакăн пек ҫуралса тухнă атомсенчен сивĕ, первобытнăй текен тĕтрелĕх пулса тăрать. Çак тĕтрелĕх çавăрăнса тăнипе, нумай миллиард ҫулсем иртсен, пĕр ҫĕре чăмăртанать, вĕриленет, вĕри ҫĕнĕ çăлтăр—хĕвел пулса тăрать.

Çапла ĕнтĕ кучухнехи наука кăтартса панă тăрăх, эпир çакăн пек вывод патне пырса тухатпăр: тĕнчене турă туни ҫинчен тата вăл пĕтесси ҫинчен тĕн юптаракан халлап вăл —пуҫламĕшĕнчен вĕҫне ҫитех суя ялапа, тĕнчен пуҫламĕшĕ нихăҫан та пулман тата унăн вĕҫĕ те нихăҫан та пулмасть; тĕнче вăл — вĕҫĕ-хĕррисĕр ataланса пыракан материаллăй процесс.

ХАУСТОВ.

Чăваш пединститучĕн астрономи преподавателĕ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлнă куна пирĕн çĕршывра йĕçыннисем производствăри çĕнĕ çĕнтĕнӳпе паллă турĕç.

Мускаври Ф. Э. Дзержинский ячĕпе тăракан Трехгорнăй мануфактурăри ткачсем конференци уçăлас умĕн йĕçĕн рекордлă тухăçне панă. Вĕсем 80.200 метр пир-авăр тĕртсе кăларнă. Прядильщиксем 6.053 килограмм çип хатĕрленĕ.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлнă кун Мускав патĕнчи бассейнри горняксем планран иртнĕрех нумай пин тонна çĕркăмрăк кăларнă. «Волховуголь» трестĕнчи 18-мĕш номерлĕ малта пыракан шахтăра йĕçлекен горняксем пысăк йĕç тухăçлăхĕн образецĕсене кăтартнă. Вĕсем шахтăн проектлă мощноçне икĕ хут ытла иртнерех янă.

Грузири колхозниксем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлнă куна сураки пуçланнипе паллă тунă. Телавски районри 29 колхоз уйăхре тухнă. Гулгули ялĕнчи ялхуçалăх артелĕ пирвайхи кун 10 гектар тулă акнă, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз — 5 гектар акнă. (ТАСС).

Йĕçыннисем Маленков юлташ докладне сӳтсе-явăççĕ

Февралĕн 16-мĕшĕнче Маленков юлташ партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕнче тунă доклада коллективлăн вулама Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозаводри рабочисем пиншер çын пухăннă. Пĕр-пĕрин шухăшĕсене каласа парса, рабочисем çапла каланă: Маленков юлташ асăннă çитменлĕхсем Мускаври автозавода та пур, тенĕ. Рабочисем организацийлĕ-техникăллă çитменлĕхсем çинчен калакан примерсене илсе кăтартнă, ĕçе мĕнле лайăхлатасси çинчен сӳтсе-явнă.

Ленинградри заводсенче, фабрикăсенче, депосенче тата вагон участокĕсенче Маленков юлташ докладне хĕрӳллĕн сӳтсе-явнă.

— Маленков юлташ, — тенĕ ОГПУ ячĕпе тăракан завод директорĕ Соловьев юлташ, — промышленноçпа транспорт ĕçĕнчи тĕп çитменлĕхсем çинчен ыйтăва тĕрĕс лартрĕ. Çак докладран пирĕн хамăр валли практикăллă выводсем тăвас пулать—техника тĕлĕшĕнчен пĕр вырăнта тапăртатса тăрассине хирĕç хăюллăнрах кĕрешес пулать, чи çĕнĕ конструкциллĕ машинăсемпе ĕçлеме часрах вĕренсе çитес пулать, производствăн пĕтĕм процесне кирлĕ пек лайăх йĕркелесе ярас пулать. (ТАСС).

Хăйсен сăмахĕсене пурнăçларĕç

Пĕр уйăх каялла Çĕрпӳ районĕнчи Рындино, Çĕнĕ ял, Уйкасси, Булдеево, Анатри Кипекçе тата Тивĕш ялсовечĕсем ВКП(б) XVIII конференцийĕ уçăлнă куна государство умĕнчи пур обязательствăсене те срокчен пурнăçа кĕртме пулса хăйсем çине обязательствăсем илнĕччĕ.

Февралĕн 10-мĕшне Рындино тата Çĕнĕ ял ялсовечĕсенчи колхозниксем культсборпа самообложени укçине пĕтĕмпех парса татрĕç. Çак ялсовечĕсем квартал планне 108 процент ытларах тултарнă. Анатри Кипекçе ялсоветĕнчи ĕççыннисем те февралĕн 12-мĕшĕнче хăйсем çине илнĕ обязательстăна ытлашшипех тултарнă.

Çак çӳлте асăннă ялсовечĕсем укçатенкĕ пухас плана тултарас енĕпе ытти ялсоветсемшĕн примерлă пулса тăраççĕ, вĕсем ытти ĕçсем тăрăх та мала тухса пыраççĕ.

Н. ЯСНОПОЛЬСКИЙ.

Çураки вăхăтĕнчи суту-илӳ

ССР Союзĕн кăнтăр районĕсенче çуркуннехи уйхир ĕçĕсем пуçланнă. Сывăх вăхăтрах Союзăн пĕтĕм территорийĕ çинче çураки ĕçĕсем сарăлса каяççĕ. Потребкооперати органĕнсем çуракинче колхозниксем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисем валли таварсем тăратма хатĕрленсе çитеççĕ. Вакă суту-илӳ пункчĕсен — лареккисем, куçса çӳрекен буфетсен хисепĕ ӳсет. Вĕсем валли уйхир бригадисемпе стансене тухса çӳреме графиксем палăртса панă.

Центросоюз президиумĕ ялти магазинсемпе куçса çӳрекен лареккисенче пулма тивĕçлĕ таварсен обязательнăй минимумне çирĕплетнĕ. Куллен кирлĕ таварсемсĕр пуçне, вăл минимума культтоварсем, медикаментсем кĕртнĕ.

Апатлану ĕçне уйрăмăнах тимлĕн организацилеççĕ. Нумай вырăнсенче çĕрĕç пайĕсем колхоз кухаркисен курсĕсемпе семинарĕсене уçнă, вĕсем çураки вăхăтĕнче уйри стансемпе бригадăсенче ĕçлемелле пулаççĕ. Çак курсенче вĕрентме предприятисенчи столовăйсенче ĕçлекен чи лайăх поварсене яраççĕ. Вырăнсенчи сельпосем колхозсем паракан продуктсенчен тĕрлĕ апат-çимĕç хатĕрлеме колхоз правленийĕсемпе договорсем тăваççĕ.

(ТАСС).

Таш-Сакинск каналĕн иккĕмĕш черетне туса пĕтернĕ

УРГЕИЧ (Узбек ССР). Узбекистанри Хорезм облаçĕпе Туркмении Ташауз облаçĕнчи колхозниксем, Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе социализмлă ăмăрту сарса ярса, пысăк çĕнтерӳ тунă. Таш-Сакинск каналĕн иккĕмĕш черетне ăнăçлăн туса пĕтернĕ. Кĕске вăхăтрах 5.300 кубометр çĕр алтса кăларнă, гидротехнически пысăк сооруженисем — виçĕ сооружени туса лартнă. Канал Хорезм тата Ташауз облаçĕсенчи 175.000 гектар çĕре шăварма шыв парать.

(ТАСС).

Колхозри тинĕс-çар клубĕ

КРАЙНОВКА ЯЛĔ (Орджоникидзе крайĕ). Кизляр районĕнчи пулăçсем пурăнакан Крайновка ялĕнче колхозри тинĕс-çар клубĕ уçăлнă. Клуб ялти чи лайăх пӳртсенчен пĕринче вырнаçса тăрать. Колхозсен правленийĕсем вĕренӳре кирлĕ пособисем туянма средствăсем уйăрса панă. 20 çамрăк пулăçколхозник тинĕс-çар ĕçне вĕренме тытăннă та ĕнтĕ.

Кизляр округĕнчи ĕççыннисем çар ĕçĕпе питех те интересленеççĕ. Оборона ĕçне вĕренмелли тĕрлĕ кружоксенче 11 пин çын ытла вĕренет.

3.544 изобретени тата рационализаторла сĕнӳсем

МУСКАВ. Иртнĕ çул СССР Наркомземĕ научнăй работниксем, колхозниксем, инженерсем, машинно-тракторнăй станцисен работникĕсем панă 3.544 изобретенине тата рационализаторла сĕнӳсене пăхса тухнă. Изобретенисен чылаях пысăк пайне ырланă. Вĕсенчен чи лайăххисене кăçалхи çулах производствăна параççĕ. Вĕсем çĕршыври машинно-тракторнăй станцисене тата колхозсене çулталăкра çĕршер миллион тенкĕ перекетлесе хăварма пулăшаççĕ.

Тимирязев ячĕпе тăракан ялхуçалăх академийĕн доценчĕ В. А. Коробов юлташ тракторсен шатунлă подшипникĕсене çу сĕрме çĕнĕ система сĕннĕ, ăна мĕнпур МТС-сенче ĕçе кĕртеççĕ.

Талккишпех хутла пĕлекен республика

ТБИЛИСИ. Грузи хăй 20 çул тултарас умĕн культура фронтĕнче чаплă çитĕнӳ тунă. Вăл талккишпех хутла пĕлекенсен республика пулса тăчĕ. Хальхи вăхăтра ялсемпе хуласенче хутла пĕлменнисен юлашки групписене массăллă вĕрентсе кăлараççĕ.

Совет влаçĕ тунăранпа 300.000 ĕççыннине вĕрентсе кăларнă, кайран вĕсенчен нумайĕшĕ вăтам тата аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă. Грузире кашни пĕр пин çын пуçне 232 çын вĕренет. Республикăра 30.000 педагог ĕçлет.

1.700 пин гектар сад

Иртнĕ çул Совет Союзĕнче улмаçырла сачĕсем 1.700 пин гектар шутланнă, вăл шутран 200 пин гектарĕ — Бессарабири, Çурçĕр Буковинăри, Литва, Эстони, Латви республикисенчи, Украинăпа Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсенчи садсем. Кăçалхи çул колхозсенче çĕнĕрен 105.700 гектар сад лартма палăртнă.

Комсомолецсем средствăсене перекетлессишĕн кĕрешеççĕ

Керчьра Войков ячĕпе тăракан металлурги комбинатĕнчи томас цехĕнчи комсомолецсен пуçаруллă группи январь уйăхĕнче 78 пин тенкĕлĕх 349 тонна хурçа перекетлесе хăварнă. Комсомолецсен группине инженер-комсомолец Струков ертсе пырать. Силовой установкăсенчи комсомолецсем 2 тонна цветной металл пухнă, домна цехĕнче 9,5 пин тонна кокс перекетлесе хăварнă.

МТС-сенче горючине перекетлессишĕн

Сталинград облаçĕнче çураки пуçланиччен тракторсене сухаланă çĕртех горючи пама 1.000 тележка организацилеççĕ. Бригадăсен яланлăх станĕсенче горючипе çу таврашне сыхласа усрама пин подвал ытла тума палăртнă. МТС-сенче горючине перекетлес ыйту тăрăх облаçри канашлу пулса иртнĕ, канашлура Сталинградпа Ростов облаçĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту договорĕ тунă. Кăçалхи çул урапаллă кашни трактор пуçне 400 килограмран кая мар, гусеничнăй трактор пуçне 800 килограмран кая мар горючи перекетлеме обязательство илнĕ.

Пăртан тунă овощехранилище

Ленинградра Московски районри овощекомбинатăн территорийĕнче пăртан питех те пысăк склад туса пĕтереççĕ. 1.000 тăваткăл метрлă тата 7 метр çӳлĕш çак складра чĕрĕ пахча-çимĕçсемпе улма-çырла таврашĕ сыхласа усрамалла пулать. Унта 430 тонна ытла кĕрсе вырнаçать. Пĕр çуртăн стенисемпе маччин хулăмĕшĕ — 3 метр. Ана ăшăран хӳтлекен сийпе витеççĕ. çавăнпа та вăл нумай вăхăт ларма пултарать.

Коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн чаплă çĕнтерĕвĕ

Суйлав кунĕ пысăк çĕкленӳпе иртрĕ

ВАРМАР, февралĕн 17-мĕш. (Телефонпа). Суйлав кунĕ районри ĕççыннисемĕн пысăк уяв пулса тăчĕ. Ĕçыннисем СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйламалли куна савăнса кĕтсе илчĕç. Ыран суйлав тенĕ кун каçхине нумай колхозсенче суйлав умĕнхи митингсем пулса иртрĕç. Вăл митингсенче Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине тата суйлавсен кунне хатĕрленнĕ май илнĕ обязательстăсене мĕнле пурнăçлани çинчен сӳтсе-явнă. Нумай колхозсем хăйсен обязательстăсене ăнăçлăн тултарнă. Арапуçĕнчи «Арабось» колхоз вăрман хатĕрлевĕн çулталăкри планне ытлашшипех тултарнă. Çуракине хатĕрленсе çитнĕ темелле.

Чăваш Çырмари «Коминтерн» колхозта çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе пырать. Халĕ колхоз торф турттарать. Кăçал колхоза çĕнĕрен 19 хуçалăх хутшăннă. Çакăн пек колхозсем районра сахал мар.

«Аниш», «15 съезд ВКП(б)» колхозсем те çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе юлашки вăхăтра чылай ĕçсем туса иртнĕрчĕç.

Февралĕн 16-мĕш. 6 сехет тĕлне суйлав участокĕсем халăхпа тулнă. Кив Мăнтăрти 30-мĕш номерлĕ суйлав участокне ватă колхозницăсем — 78 çулхи А. Прокопьева, 81 çулхи Е. Никифорова юлташсем чи малтан пынă. Вĕсем бюллетеньсене илсе урнăна яраççĕ.

Çак участокра каçхине 6 сехет тĕлне пур суйлавçăсем те сасăласа пĕтернĕ. Пысăк Енкассинче те суйлав активлăн иртрĕ. Икĕ сехет хушшинче мĕнпур суйлавçăсенчен 96 процентĕ сасăланă.

Суйлав кунĕ суйлав участокĕсенче савăнăçлăн иртрĕ. Кашни суйлав участокĕнчех агитаторсем тата ялти интеллигенци суйлавçăсем хушшинче калаçусем ирттернĕ. Аслă Пинерти суйлав участокĕнче, кăнтăрлахи вăхăтра, ятарласа уйăрнă пӳлĕмре шкул ачисем постановка тата концерт лартса пачĕç. Суйлав участокĕнче иртен пуçласа каçченех халăх тулли пулчĕ.

Çавăн пекех Аслă Чакри суйлав участокĕнче те суйлав кунĕ савăнăçлăн иртрĕ. Унта патефон, хуткупăс пулнă. Колхозниксемпе колхозницăсем вăхăта ташласа, юрласа ирттерчĕç.

М. ТИТОВ.

Шупашкарти 2-мĕш номерлĕ суйлав участокĕнче.

Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекен комсомолка çамрăк суйлавçă Татьяна Самойлова 1941 çулти февралĕн 16-мĕшĕнче пĕрремĕш хут СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсене хутшăнчĕ. Укерчĕк çинче: Самойлова юлташ бюллетене урнăна ярать.

Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Шанчăклă кандидатшăн сасăларĕç

КУСЛАВКА, февралĕн 17-мĕш. (Телефонпа). Февралĕн 16-мĕшĕнче Елчĕк ялĕ ирех вăранчĕ. Унтан-куntан халăхсем утма пуçларĕç. Вĕсем кашниех праçник тумĕпе тумланнă. Ултă сехет çитмен-ха, суйлавçăсем 56-мĕш номерлĕ суйлав участокне васкаççĕ. Суйлав участокне ватă колхозница Агельская, учительница-орденоносец Николаева юлташсем чи малтан çитнĕ, вĕсем чи малтан сасăласшăн.

Кĕтнĕ вăхăт çитрĕ. Шăпах 6 сехетре участокри суйлав комисси уçăлчĕç. Суйлавçăсем илемлетнĕ коридор тăрăх бюллетеньсене илме пыраççĕ. Сĕтел умне чи малтан учительница Николаева юлташ пырса бюллетень илет те сасăламалли кабинăна кĕрет. Унта кĕрсе тухнă хыççăн вăл:

— Эпĕ коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блок кандидачĕшĕн—Белолипецкий юлташшăн сасăларăм,—терĕ.

Суйлав участокĕнче буфет ĕçлет. Унтах канмалли пӳлĕм. Ватти, çамрăкки хăйсен вăхăтне савăнăçлăн ирттереççĕ.

Суйлав пысăк активлăхпа иртрĕ. Кăнтăрла тĕлне мĕнпур суйлавçăсенчен 54 процент сасăланă пулсан, каçхине 9 сехет тĕлне суйлавçăсем пурте сасăласа пĕтернĕ.

КОРНИЛОВ.

Пирвайхи бюллетень

Февралĕн 16-мĕш — суйлав кунĕ. Ирхине 5 сехет. Шупашкарти 10-мĕш номерлĕ суйлав участок комиссин членĕсем пурте хăйсен вырăнĕнче. Агитаторсем, канмалли пӳлĕмре, хĕрлĕ кĕтесре, васкавлă пулăшу паракан пунктра, ачасен пӳлĕмĕнче тата буфетра ĕçлекенсем те кăтартнă вăхăтра пухăнса çитрĕç.

Суйлав участокĕ суйлавçăсене кĕтсе илме пур енчен те тĕплĕн хатĕрленнĕ.

Ирхине 6 сехетре участокри суйлав комисси председателĕ комисси членĕсем умĕнче, суйлав ещĕкне тата суйлавçăсен çирĕплетнĕ формăпа тунă списокĕ пуррине тĕрĕслерĕ. Ещĕке хупса комисси пичечĕпе пичетлесе хучĕ. Çакăн хыççăн комисси председателĕ Суров юлташ суйлавçăсене сасă лама тытăнма чĕнчĕ.

Суйлавçăсем суйлав участокне 5 сехет иртсенех йышлăн пухăннă. Чи пирвай Петр Ильич Котов юлташ сасăларĕ. Вăл суйлав участокне те пуринчен малтан çитнĕ.

Котов юлташ Шупашкар хулинче почтальон пулса ĕçлет. Хăй çитмĕл çултан иртнĕ пулин те почтальон ĕçĕсене юратса тата тĕплĕн тăвать. Вăл ку ĕçре 42 çул хушши пĕр улшăнмасăр ĕçлет. Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ ăна стахановла ĕçлесе пынăшăн хисеплĕ грамота парса наградăланă.

Иккĕмĕш бюллетене Карл Маркс урамĕнче 32-мĕш номерлĕ çуртра пурăнакан суйлавçă И. И. Бронникова илет. Вăл 1856-мĕш çулта çуралнă, ватă суйлавçă. Ватă пулсан та суйлава çуранах пынă.

— Эпĕ çынсене чăрмантарма вĕренмен. Хамăн ĕмĕре прачкăра ĕçлесе ирттернĕ. Сталинла Конституци пире, хĕрарăмсене, пысăк право панĕ. Çак правăпа усă курнишĕн савăнатăп, — тет вăл.

4-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекен Константин Порфирьевич Павлов юлташ суйлава пирвайхи хут хутшăнса сасăларĕ. Çавăн пекех Л. Похвалова тата М. Яковлева юлташсем те çамрăк суйлавçăсем, суйлавра пуçласа пулчĕç. Вĕсем хăйсен совет çĕршывĕ умĕнчи тивĕçне пысăк савăнăçпа пурнăçларĕç.

П. ПАВЛОВ.

Тулли кăмăлпа

Тул çутăласси инçе-ха. Шупашкар халăхĕ ыйхăран вăраннă. Урамсем тăрăх унталла та кунталла çынсем тимлĕн утаççĕ. Харпăрăй суйлав участокне кĕрсе хăйсен кандидачĕсемшĕн сасăлама васкаççĕ.

Тăхăрмĕш суйлав участокĕ Калинин урамĕнчи Крупская ячĕпе хисепленекен шкул çуртне вырнаçнă. Ултă сехет çитмен-ха. Суйлав комиссин составĕ хăйĕн вырăнĕнче. Суйлавçăсем те чылай пухăннă ĕнтĕ, вăхăт çитессе кĕтеççĕ.

Шăп ултă сехет. Суйлав комисси председателĕ Г. Лаврентьев юлташ бюллетеньсем ямалли урнăна сĕркĕчпе пичетлерĕ те суйлавçăсене сасăлама тытăнма чĕнчĕ. Чи малтанхи бюллетене Пелагея Степановна Алексеева суйлавçă алла илчĕ те кабинăна кĕрсе сасăласа тухрĕ.

— Эпĕ 76 çул пурăнатăп. Елĕк тарçăра сахал мар нуша тӳснĕ. Анчах Сталин юлташ туса панă саманари пурнăç пек ырă пурнăç курайман. Эпĕ сталинла блок кандидачĕшĕн тулли кăмăлпа сасăларăм,—тет Алексеева.

Суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри суйлав комисси сĕтелĕ умне пырса бюллетене илсе тепĕр пӳлĕмри кабинăсене кĕрсе тухаççĕ. Бюллетень хыççăн бюллетень урна ăшне ӳкет.

Акă, илемлĕ тумланнă, савăнăçлă сăнлă çамрăк хĕрача именчĕклĕ пускаласа комисси сĕтелĕ умне пырса тăчĕ.

— К. Н. Лисицина, 1922 çулта çуралнă, — терĕ комисси секретарĕ список çине пăхса. Лисицина бюллетень илсе сасăламалли кабинăна кĕрсе тухрĕ те чипер хуçлатнă бюллетене урнăна ячĕ.

— Çак саманта эпĕ тахçантанпах кĕтсеччĕ. Хамăн пурнăçра паянхи кун государство ĕçне чи малтанхи хут хутшăнма телейлĕ пултăм, — терĕ вăл пӳлĕмрен тухсан. Лисицина Шупашкарти акушеркăсен шкулĕнче иккĕмĕш çул вĕренет.

Арçынĕ, хĕрарăмĕ, ваттисем, çамрăксем пĕрерĕн-икшерĕн, суйлав урни патне пырса сасăлаççĕ. Хăйсен сассисене вĕсем коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн пачĕç.

М. В—ков.

Призывниксем кавалери ĕçне вĕренеççĕ

ВОРОШИЛОВСК. Орджоникидзе крайĕнчи колхозник-призывниксем çар ĕçне вĕрентсе хатĕрлеме пуçланă. Черкесипе Карачай хăйсен кавалерисчĕсене çара ăсатнă чух вĕсене кирлĕ мĕнпур снаряженине парса яраççĕ.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ.)

Германири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 14-мĕш иран тенĕ чух çĕрле Германи бомбардировщикĕсем çурçĕр Африкăра Англин çар лагерьне атакăланă, вĕсем çулсене çĕмĕрсе тăкнă тата грузовиксен колонни çине бомбăсем пăрахнă. Германи бомбардировщикĕсем, тесе каланă Германи сводкинче, Бенгазири тата Англин опорнăй пунктĕнчи Эль-Агеилри çар сооруженийĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен ӳсĕмне палăртса, Рейтер агентствин авиаци обозревателĕ çапла çырать: Çывăхри Хĕвелтухăçне Германия хăйĕн самолечĕсене йышлăн ярĕ-ши вара, мĕншĕн тесен апла туни вăл унăн Хĕвеланăçĕнчи позицийĕсене вăйсăрлатасси патне илсе пыма пултарать.

Хĕвелтухăç Африкăра вăрçă ĕçĕсем пуринчен ытларах Итали Сомалийĕнче вăйлăнтарах пынă. Низимайо зонинче (Итали Сомалийĕ), тесе каланă Итали сводкинче, хальхи вăхăтра хаяр çапăçу пырать. Итали самолечĕсем Англин пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисем çине бомбăсем пăрахнă, пĕр крейсер çине бомбăсем тĕл ӳкнине палăртнă, Англин тепĕр крейсерне, Ногадишо çыранĕ патĕнче (Итали Сомалийĕ), Итали бомбардировщикĕсем хăваласа янă. Англи войскисем, тесе каланă Англи сводкинче, февралĕн 11-мĕшĕнче Итали пунктне — Афмадуна (Итали Сомалийĕнче шалалла 70 миляра) илнĕ хыççăн, Италин Було Эрилло текен постне (Джуба юханшывĕ хĕрринче, Афмадуран хĕвеланăç енелле) атакăлама пуçланă. Итали войскисен хăйсен позицийĕсенчен тухса каймалла пулнă.

Эритрейăра, Керен районĕнче, Итали сводкинче кăтартнă тăрăх, англичансем хĕссе пырасси чакнă. Англи авиацийĕ, тесе пĕлтереççĕ Англи сводкинче, Керен районĕнче çапăçакан çара пулăшать. Керенри чугунçул станцийĕ çине бомбăсем вăл ӳкнине палăртнă.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче Итали самолечĕсем Ла-Валетта порчĕн сооруженийĕсем тата Микаббри (Мальта утравĕ) аэродром çине пыра-пыра бомбăсем пăрахнă.

Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, кăнтăр Италире парашютистсене антарнă, вĕсен çав районри портсенчи хăшпĕр объектсене çĕмĕрсе тăкмалла. Министерство çапла пĕлтерет: хальхи вăхăтра операцисен результачĕсем пирки нимĕн те каланă вăхăтра тапăнса кĕме хăтланĕç, тесе шутлаççĕ. Çĕрлехи тĕттĕмпе усă курса, баржăсемпе суднăсем тинĕсе тухĕç, тул çутăлма пуçланă вăхăт тĕлне Англи çыранĕ патне кирлĕ чухлĕ сывхарса çитĕç. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Франкирен, Голландирен тата Бельгирен пур пек бомбардировщиксемпе истребительсем йăлтах вĕçсе тухĕç, вĕсем хăйсен ĕçĕсене малтанах кашни секундăна шута илсе хатĕрленĕ расписани тăрăх туса пырĕç. Кăнтăр-Хĕвелтухăç Англин çыранри районĕсенче сывлăшри вăйлă çапăçу пулса иртме пултарать.

Çакнашкал план фантазилле план пек туйăнма пултарĕ, тет хаçат, анчах та вăл пулма пултарать. Немĕçсен организаторла чаплă пултарулăхне шута илес пулать.

„Таймс“ хаçат Германия Англи çине тапăнса кĕме пултарасси çинчен сӳтсе-явать

ЛОНДОН, февралĕн 16-мĕш. (ТАСС). Германия Англи çине мĕнле майпа тапăнса кĕме пултарасси çинчен сӳтсе-явса, Англири «Таймс» хаçат çапла кăтартса парать: тинĕсрен тапăнса кĕни ăнăçлă пуласса шанмах çук. Çавăнпа та Германи командованийĕ малтан хăйĕн войскисене Англие самолетсемпе илсе пыма хăтланса пăхĕ. Çак сывлăш десантчĕ Англи территорийĕ çинче хăй валли опорлă базăсем туса хума, Англин çыранри укрепленийĕсемпе аэродромĕсене пĕтерсе тăкма пултарас пулсан, çакăн хыççăн нимĕçсем çĕнĕ войскăсене Англие судăнсемпе тата баржăсемпе турттарса пыма пултарĕччĕç. Нумай экспертсем çапла шутлаççĕ: пуринчен малтан Германи авиацийĕ самолетсем çинчен войскăсем антарса хăварма палăртнă вырăнсем çине вăйлăн бомбăсем пырса пăрахĕ. Нимĕçсем тул çутăлса килнĕ вăхăтра тапăнса кĕме хăтланĕç, тесе шутлаççĕ. Çĕрлехи тĕттĕмпе усă курса, баржăсемпе суднăсем тинĕсе тухĕç, тул çутăлма пуçланă вăхăт тĕлне Англи çыранĕ патне кирлĕ чухлĕ сывхарса çитĕç. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Франкирен, Голландирен тата Бельгирен пур пек бомбардировщиксемпе истребительсем йăлтах вĕçсе тухĕç, вĕсем хăйсен ĕçĕсене малтанах кашни секундăна шута илсе хатĕрленĕ расписани тăрăх туса пырĕç. Кăнтăр-Хĕвелтухăç Англин çыранри районĕсенче сывлăшри вăйлă çапăçу пулса иртме пултарать.

Çакнашкал план фантазилле план пек туйăнма пултарĕ, тет хаçат, анчах та вăл пулма пултарать. Немĕçсен организаторла чаплă пултарулăхне шута илес пулать.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçăра лăпкă тăнă пирки Рейтер агентствин авиаци обозревателĕ мĕн çырыть

ЛОНДОН, февралĕн 15-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин авиаци обозревателĕ çапла çырать: Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçăра лăпкă тăни Европăн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче çанталăк условийĕсем начар пулнинчен килет, — тесе ăнлантарса параççĕ Англири наблюдательсем. Германи çак лăпкăлăхпа усă курса, вăл хăйĕн эскадрильисене реорганизацилеме, вĕсене çĕнĕ, кучухнехи вĕрçĕнĕ бомбардировщиксемпе тата истребительсемпе вăйлатма шутлать. Çакăн пек реорганизацисĕр, тесе çырать корреспондент, Германия Англи тĕлĕшпе сывлăшран тата тинĕсрен вăйлă блокада тума, çавăн пекех тапăнса кĕресси ăнăçлăн пулассине шанма пултараймасть. Кунсăр пуçне, çавăн пек реорганизацисĕр Германия хăйĕн оккупациленĕ территорисене Англи самолечĕсем пырса тапăнассинчен сыхланассине вăйлатма çук.

Малалла обозреватель çапла çырать: Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи Англин сывлăш-çар вăйĕсем ӳссех пыраççĕ. Англи эксперчĕсем шучĕпе Сывăхри Хĕвелтухăçне Германия хăйĕн самолечĕсене йышлăн ярĕ-ши вара, мĕншĕн тесен çапла туни вăл унăн Хĕвелтухăçĕнчи позицийĕсене начарлатнă пулĕчĕ. Юлашкинчен обозреватель çапла кăтартса парать: çитес вăхăтра Хĕвеланăçĕнче сывлăшра пулакан татăклă çапăçусем хальхи вăрçă мĕнпе пĕтессине татса парĕç. Çак сывлăшри çапăçусене хатĕрленес тĕлĕшпе Англипе Германи авиацийĕ те хăйсен вăйĕсене пухаççĕ.

Англипе Турци хушшинчи çар каласăвĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Анкарари корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англи çар миссийĕпе Турци генеральнăй штабĕн делегацийĕ юлашки хут тĕл пулса калаçнă. Калаçусем питех те тусла атмосферăра иртнĕ, вĕсен результачĕсем икĕ енĕпе те кăмăллă пулнă, тесе пĕлтереççĕ.

Англи генерал-лейтенанчĕ Маршалл-Корнуолл тата авиаци вице-маршалĕ Элмхерст часах Турцирен тухса каяççĕ, Англин çывăхри хĕвелтухăçĕнчи вăйĕсен командующине Уэйвелл генерала калаçусен результачĕсем çинчен каласа параççĕ. Анчах вĕсем Турцине тепĕр хут килеççĕ, тесе шутлаççĕ. Енер Маршалл-Корнуолл Турци генеральнăй штабĕн начальникĕ Чакмак патĕнче пулнă.

Хурткăпшанкăсемпе кĕрешекенсен курсĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Çĕрĕç пайĕ тата МТС ӳсен-тăрансене сиенлекен хурткăпшанкăсемпе кĕрешес ĕçе вĕренмелли курс туса ирттернĕ. Унта 47 колхозник вĕреннĕ. Курсра пулнисем программăна лайăх вĕренсе тухнă.

Çак кунсенче çавăн пек курс татах та пулмалла. Вунсакăр колхозник вĕренмелле.

Т. Никитин.

Лекци

Паян, февралĕн 18-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче философи çинчен вулакан лекцисен циклне итлекенсем валли «Борьба материализма и идеализма в XVII веке» темăпа тӳлевлĕ лекци пулать. Лектор — Сафрошкин юлташ.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать.

ПАРТКАБИНЕТ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: ре[illegible]ран—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çыру[illegible]семпе рабселькорсен пайĕн —2—30. «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23,

НТ 2466.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР, Заказ № 146. Ф. Б. 58×84 п. л.